24-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

1941 ДЕКАБРЬ 7 ВЫРСАРНИКУН 289 (6004) №

ЧĂВАШ КОММУНИ

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ.

Çĕршывăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсене— парти ретне

Нимĕç империализмĕн вăрă-хурахла ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртессишĕн вăрçă туса пыракан юнлă Гитлерăн йыткĕтĕвĕсем СССР Союзĕнчи халăхсен ирĕклĕхĕ çине улталăн тапăнчĕç. Пилĕк уйăх ытла ĕнтĕ вăрçă пырать. Çак вăрçăра нимĕç оккупантчĕсене хирĕç Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флот паттăрăн çапăçаççĕ. Вĕсене мĕнпур совет халăхĕ пулăшса тăрать.

Тĕрĕслĕхшĕн, ирĕклĕхшĕн пыракан вăрçă пирĕн тăван çĕршывăн çыннисене пурне те ура çине тăратрĕ. Рабочисемпе служащисем, колхозниксем хăйсен речĕсене пĕрлештерсе халăхсен телейĕшĕн, ирĕклĕхĕшĕн, çутă пурнăçĕшĕн пыракан кĕрешӳре пиçĕхеççĕ, сирĕпленеççĕ. Совет халăхĕ Ленин—Сталин партийĕ тавра татах та тачăрах пĕтĕçрĕ. Отечественнăй аслă вăрçă вăхăтĕнче ĕççыннисен политикăллă та общественнăй активлăхĕ нихăçанхинчен ытла вăйланчĕ.

Большевиксен партийĕн халăх хушшинчи авторитечĕ калама çук пысăк. Вăл ĕççыннисемшĕн чи çывăх, тăван парти. Ăна пĕтĕм халăх вĕçĕмсĕр юратать. Пирĕн партин историйĕнче яланах, вăл йывăрлăхсем умĕнче тăнă чухне, çĕршыв умне хăрушлăх тухса тăнă чухне, çав йывăрлăхран тухма, хăрушлăхсене сирсе яма пĕтĕм вăя пухса кĕрешнĕ вăхăтра, партипе тăван çĕршывăн ĕçне тарăнăн ĕненсе тăракан чи паттăр, чи хастар, хăюллă çынсем парти ретне кĕнĕ. Çавăн пекех халĕ те. Партипе массăсем хушшинчи çыхăну кунран кун çирĕпленсе пырать. Халăхăн чи лайăх ывăл-хĕрĕсем большевиксен партийĕн ретне тăраççĕ, хăйсен малаллахи пĕтĕм пурнăçĕпе шухăшне парти ĕçĕпе çыхăнтараççĕ.

1924 çулта Пĕтĕм Союзри Советсен II Съездĕнче Сталин юлташ çапла каланă:

«Эпир, коммунистсем, уйрăм йышши çынсем. Эпир уйрăм йышши материалран тунăскерсем. Эпир — пролетариллĕ аслă стратегăн çарĕ, Ленин юлташăн çарĕ пулса тăратпăр. Çав çарта тăрассинчен хисепли урăх нимĕн те çук. Ленин туса, ертсе пынă парти членĕ ятĕнчен çӳлли урăх нимĕн те çук. Çакăн пек партин членĕ пулма пурне те мар пӳрнĕ. Çавăн пек партире тăнипе çыхăнса тăракан инкеншĕн тăвăлсене чăтма пурне те мар тивет. Рабочи класăн ывăлĕсем, нушапа кĕрешӳ ывăлĕсем,—акă камсем пулмалла, пуринчен малтан, çакăн пек партин членĕсем».

Фашизмăн урнă бандисене хирĕç, хамăр çĕршывăн никама пăхăнманлăхне, ирĕклĕхне сыхласа упрассишĕн пурнăçа шеллемесĕр хастарлăн кĕрешекенсем, фабрикăсемпе заводсенче, колхозсен уйхирĕсенче ывăнма пĕлмесĕр ĕçлекенсем çак кунсенче хăйсен пурăнăçĕпе кĕрешĕвне рабочи класăн малти отрячĕпе, Ленин—Сталин партийĕпе сыхăнтараççĕ. Парти ретне кĕме ыйтса çырнă заявленисенче вĕсем, Ленин—Сталин партине вĕçĕмсĕр юратнине палăртса, унăн шанчăклă, тивĕçлĕ членĕ пулма сăмах параççĕ, нимĕç оккупантчĕсене çĕнтерес ĕçе пĕтĕм вăя пама тупа тăваççĕ.

Хĕрлĕ Çарпа Хĕрлĕ Флотăн паттăр воинĕсем, тăшманăн тылĕнче хастарлăн кĕрешекен партизансем, ĕç фронтĕнчи геройсем производствăпа ялхуçалăх ĕçĕнчи стахановецсемпе ударниксем, совет интеллигенцин чи лайăх представителĕсем çак кунсенче большевиксен партине кĕме тăрăшаççĕ.

Партин Чăваш республикинчи организацийĕ вăрçă пуçланнăранпа ВКП(б) ретне çĕршер çынна илчĕ. 1941 çулти август, сентябрь тата октябрь уйăхĕсенче ВКП(б) Хĕрлĕ Чутай райкомĕ—29 çынна, Кувакино райкомĕ — 18, Канаш райкомĕ — 28, Шăхасан райкомĕ 20 çынна парти членне илнĕ.

ВКП(б) Канаш райкомĕ ноябрĕн 3-мĕшĕнче парти членне вагонсем юсакан заводри фрезеровщика «За трудовое отличие» медальпе наградăланă И. Осипов юлташа илнĕ. ВКП(б) Чăваш Обкомĕн VIII пленумĕ хыççăн вагонсем юсакан заводри парторганизаци кандидатсем тата партире тăман актив хушшинче ĕçлессине чылай лайăхлатрĕ. Заводра токарь пулса ĕçлекен Маженков юлташ парти членĕн кандидатне кĕнĕ. Мазенков юлташ ĕç нормине 250 процент тултарса ĕçлет, унăн пуçне хăйĕн специальноçĕпе ĕçлеме 5 çынна вĕрентет. Парти ретне Демьянков мастера тата Калашникова токаре илнĕ. Калашникова юлташ ĕç нормине 2 хут тултарса ĕçлет, ВЛКСМ Канаш райкомĕн бюро членĕ пулса тăрать. ВКП(б) Чкаловски райкомĕ парти ретне М. Немакаев юлташа илчĕ. М. Х. Немакаев юлташ райпотребсоюз председателĕ пулса ĕçе лайăх туса пырать. Вăл ертсе пыракан райпотребсоюз кăçал накоплени планне 38 пин тенкĕлĕх ирттерсе тултарнă.

Парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçе большевиксем яланах тимлĕн туса пынă. Çак ĕçе уйрăмах халĕ, отечественнăй аслă вăрçă пынă кунсенче, питех те тимлĕн туса пырас пулать. Малта пыракан çынсене парти ретне илни вăл—кашни парторганизаци ĕçĕн пахалăхне, вăл массăсемпе мĕнле çыхăнса тăнине кăтартать. Актив вăрçă кунĕсенче нумай ӳсрĕ. Вăл парти ретне ӳсмелли çăлкуçĕ пулса тăрать. Çак активпа пĕрмаях çыхăну тытмалла. Ăна вĕрентсе çитĕнтермелле. Малта пыракан рабочисем, колхоз производствинче ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем, интеллигентсем хушшинче парти ретне кĕрес шухăш пысăк. Парти организацисем тивĕçлĕ çынсене парти ретне кĕме пулăшмалла, çамрăк коммунистсене ĕçре куллен вĕрентсе çирĕплетмелле.

Çакăнпа пĕрлех парти ретне çĕнĕ çынсем илес ĕçе тата кандидатсене члена илес ĕçе Ленинла—Сталинла принципа çирĕппĕн пурнăçа кĕртсе пынипе, кашни çынна уйрăмăн суйласа илнипе туса пымалла. Анчах хăшпĕр пуçламăш парторганизацисем ВКП(б) ретне çĕнĕ членсем илессинче кашни çынна уйрăмăн суйласа илес принципа пăсаççĕ. Ишлей районĕнче, Сютруков юлташ секретарь пулса ĕçлекен парторганизацире, И. Шарикова парти ретне илме йышăннă. И. Шариков хăйне обществăллă ĕçре кăтартман, производствăра япăх ĕçленĕшĕн администраци енчен выговор илнĕ, 1938—39 çулти государство умĕнчи обязательствăсене халĕ те парса татман. ВКП(б) Ишлей райкомĕ И. Шарикова парти ретне илме тăхтарĕ. Паллах, çакăн пек ĕçлекен çынсем валли большевиксен партийĕн ретĕнче вырăн пулмалла мар.

Парти ретне кĕме рекомендацисем паракан коммунистсем хăйсен рекомендацийĕсен пахалăхĕшĕн парти умĕнче ответ тытаççĕ. Çавăнпа рекоменлаци парас ĕçе çиелтен тумалла мар. ВЛКСМ Çĕрпӳ райкомĕ (секретарĕ Васильев юлташ) И. С. Роня юлташа комсомол ретне 1941 çулти июнь уйăхĕн малтанхи кунĕсенче илнĕ. Çак уйăхрах, И. С. Роня мĕнле ĕçленине пăхмасăрах, ăна ВЛКСМ Çĕрпӳ райкомĕ парти членĕн кандидатне кĕме рекомендаци панă. ВКП(б) Çĕрпӳ райкомĕ Васильев юлташа рекомендаци парас ĕçе тимлĕн тума кирлине асăрхаттарнă, И. С. Роне парти кандидатне илме тăхтанă. Парти ретне илес ĕçе Ленинла—Сталинла принципа туса пыман пирки пулнă уроксене манмалла мар. Парти речĕсен тасалăхне çивĕччĕн упрамалла.

Çĕршывăн паттăр хĕрарăмĕсем çĕршер-пинĕн заводсенче, фабрикăсенче, колхозсемпе МТС-сенче Хĕрлĕ Çар ретне хăйнă çынсен вырăнĕсене тăрса, ĕç нормине 2—3-шер хут тултарса ĕçлеççĕ. Партин вырăнти организацийĕсем хĕрарăмсене хăйсен политикăллă активлăхне татах та вăйлăн çĕкленме пулăшмалла. Ĕçре хастарлăх кăтартакан хĕрарăмсене парти ретне кĕме пулăшмалла. Партин вырăнти организацийĕсен ĕçе пĕтĕм вăя парса тăвакан колхозниксемпе колхозницăсене уйăрса илме пĕлес пулать. Малта пыракан ĕççыннисене большевикла парти ретне кĕме пулăшас пулать.

Сталин юлташ Октябрь уявĕ кунĕсенче партнăй задачăна пурнăçа кĕртсе пырас ĕçре парторганизацисем тавра çĕнĕрен пиншер çынсем пĕтĕçрĕç. Массăпа çирĕп çыхăнса тăрса, парти ретне тивĕçлĕ çынсене илессишĕн тăрăшса ĕçлер.

ЧĂВАШ АССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

К. Е. Евлампьев юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председатель заместительне уйăрса лартасси çинчен

Константин Евлампьевич **Евлампьев** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместительне уйăрса лартас.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ З. АНДРЕЕВА.
Чăваш АССР Верховный Совет Президиум секретарĕн ĕçĕсене тăваканĕ А. ИЗМАЙЛОВ.

Шупашкар хули,
1941 çулти декабрĕн 6-мĕш.

ХРОНИКА

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕ, хăйĕн 1941 çулти декабрĕн 6-мĕшĕнче кăларнă Указĕ тăрăх, В. Т. **Харитонов** юлташа Чăваш АССР Халăх Комиссарĕсен Совечĕн председателĕн заместитель обязанноçĕсенчен хăтарнă.

СССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕТ ПРЕЗИДИУМĔН УКАЗĔ

СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсен срокна куçарасси çинчен

Вăрçă вăхăтĕнчи обстоятельствăна кура, СССР Верховный Совечĕн суйлавĕсене пĕр çуллăха каярах куçарас.

СССР Союзĕн Пĕрремĕш Созыври Верховный Совечĕн полномочине çакăнта кăтартса панă срокпа çуллăха тăсас.

СССР Верховный Совет Президиумĕн Председателĕ М. КАЛИНИН.
СССР Верховный Совет Президиумĕн Секретарĕ А. ГОРКИН.

1941 çулти декабрĕн 5-мĕш.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Декабрĕн 5-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 5-мĕшĕнче пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă. Хĕвеланăç фронтĕнче пирĕн войскăсем противникăн темиçе хаяр атакине сире-сире пăрахнă, чылай участоксенче контратакăсем туса, пирĕннисем хăйсен позицийĕсене лайăхлатнă. Декабрĕн 4-мĕшĕнче сывлăшри çапăçусенче нимĕççенне 35 самолет персе антарнă. Пирĕн 13 самолет пĕтнĕ.

* * *

Декабрĕн 4-мĕшĕнче пирĕн авиаци нимĕççенне 65 танк, темиçе бронемашина, войскăсем ларса пыракан тата грузсем тиенĕ 380 автомашинăна, 15 полевой тата зенитнăй оруди, горючи тултарнă 9 автоцистернăна, грузсемпе войскăсем турттарса пыракан 145 лава пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пехотине 2 полка çити тата 150 коланутçăна вĕлерсе пĕтернĕ, сапаласа янă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче противник, питех те пысăк çухатусем туса, пирĕн чăсене хĕснĕ тата пирĕн оборонăна савăлланса кĕнĕ. Çав районра нимĕçсем хăйсен пехотин 2 дивизине çити тата танксен тепĕр дивизине пухса тăратнă. Пирĕн чăссем, контрнаступлени пуçласа ярса, вăйлă çапăçусем хыççăн противник хирĕç тăнине çĕмĕрнĕ. Нимĕçсен чăсĕсем йĕркесĕррĕн каялла чакма пуçланă. Пирĕн войскăсем, халăх пурăнакан темиçе пункта йышăнса илсе, хăйсен малтанхи позицийĕсене пĕтĕмĕшпех çирĕплетнĕ. Нимĕçсем çапăçу хирне хăйсен салтакĕсемпе офицерĕсен темиçе пин виллине пăрахса хăварнă. Пирĕн войскăсем нимĕççен çапса çĕмĕрнĕ 53 танкне, темиçе бронемашинине, 65 орудине, 50 пулеметне, 35 минометне, 500 винтовкине ытла тытса илнĕ. Çавăн пекех тата 49 автомашина, 102 тав, мотоциклсем, велосипедсем, боеприпассем нумай тытса илнĕ.

Декабрĕн 6-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерӳ

Декабрĕн 6-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле пирĕн войскăсем противника хирĕç пур фронтсенче те çапăçнă.

* * *

Хĕвеланăç фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекен Орлов юлташăн чăсĕ пĕр кун хушши çапăçса нимĕççен 12 танкне тата тăшман пехотин батальонне пĕтерсе тăкнă, 4 станковăй пулемет, 4 миномет, 12 автомашина тата ытти трофейăсем нумай тытса илнĕ. Фронтăн тепĕр участокĕнче Лизюков юлташăн боецĕсем 8 танк, темиçе орудине пĕтерсе тăкнă, тăшман пехотин 2 батальонне вĕлерсе пĕтернĕ, 10 станковăй пулемет, 4 миномет тата ытти хĕпăшалсем тытса илнĕ.

* * *

Шепетов юлташăн чăсĕ, Кăнтăр фронтĕнчи участоксенчен пĕринче кĕрешекенскер, пĕр çапăçура нимĕççен 5 танкне, минометсен 2 батарейине пĕтерсе тăкнă тата боеприпассен пысăк складне тытса илнĕ.

* * *

Кĕçĕн лейтенант Ермолаев юлташăн танк экипажĕ пĕр çапăçура противникăн 5 противотанковăй туппине пĕтерсе тăкнă, тăшманăн ДЗОТ-не, 2 блиндажне аркатнă тата пехотăн пĕр ротине вĕлерсе пĕтернĕ.

* * *

Орел хулинчен инçех мар вырăнта З. юлташ ертсе пыракан партизансен отрячĕ фашистсем çине хăюллăн тапăннă. Отряд боецĕсем Н. юханпывăх çинчи кĕпере сирпĕнтерсе янă. Часах кĕпер патне боеприпассемпе çар хатĕрĕсем тиенĕ 15 автомашина пырса капланнă. Пулеметсене вăрман хĕррине илсе туха, партизансем противник çине вăйлăн пеме пуçланă. Çак вăхăтра отрядăн тăшман флангне пырса тухнă боецĕсем вăйлăн çапнă. Икĕ сехет хушши çапăçнă хыççăн противникăн 45 çынна çити вилнĕ тата аманнă. Партизансем нумай трофейăсем тытса илнĕ. Автомашинăсене тата вĕсем çине тиенĕ груза çунтарса янă. Ноябрĕн 25-мĕшĕнче чугунçул çинчи С. станцинче партизансем бензин тултарнă виçĕ цистернăна сирпĕнтерсе янă. Пушар пулнипе нимĕççен çар хатĕрĕсен темиçе склачĕ пĕтнĕ.

* * *

Югославире патриотсен движенийĕ анлăрах та анлăрах сарăлса пырать. Партизансен нумай йышлă отрячĕсем нимĕç оккупантчĕсене ăнăçлăн пĕтерсе пыраççĕ. Ноябрĕн 26-мĕшĕнче Белградран кăнтăр енче партизансен пысăк отрячĕ Итали стрелокĕсен ротине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă. Прибой хулинчен хĕвеланăç енче вăйлă çапăçусем пуçланса кайнă. Итальянецсем авиацине тата артиллерие çапăçăва кĕртсе янă. Апла пулин те, партизансем фашистсен пĕр батальонне ытла пĕтерсе тăкнă тата халăх пурăнакан чылай пунктсене тытса илнĕ. Чылай пысăк территорие нимĕссемпе итальянецсенчен ирĕке кăларнă.

* * *

Свердловск облаçĕнчи ĕççыннисем, паттăрăн ĕçлесе, фашистла захватчиксене пĕтерсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Красногвардейски рудникри палламăш бурщик Илларион Янкин сменăра 8 норма ытла тăвать. Высокая тăвĕçинчи тимĕр рудникĕн коллективĕ, вăйлă сивĕсене пăхмасăр, пĕлтĕр çак вăхăтра кăларнинчен виçĕ хут ытларах руда кăларнă. Красноуральск заводĕнчи кăмака мастерĕ Сабенин плана 18 процент ирттерсе тултарать. Первоуральскри Новотрубнăй заводри волочильщиксен Нечипоренко юлташ ертсе пыракан смени ноябрьти программăна 10 кун малтан тултарнă. Уралри заводсенчен пĕринче рационализаторăн Корольков юлташăн сĕнĕвĕ пĕр ответлă детале хатĕрлессине виçĕ хут хăвăртлатнă.

Уралри колхозниксем те ăнăçлăн ĕçлеççĕ. Краснополянски районри Сталин ячĕпе тăракан артельре пĕр кун хушшинче 100 центнер тĕштырă çапса илеççĕ, план тăрăх 70 центнер çапмалла. Тугулымски районри «Передовик» колхоз членĕсем СССР оборонин фондне 50 центнер тĕштырă, 5 ĕне, нумай кайăк-кĕшĕксем панă.

Великобританин премьер-министрĕ господин Черчилль патне вăл çуралнă кун ячĕпе И. В. Сталин саламласа янă телеграмма

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче господин Черчилль патне вăл çуралнă кун ячĕпе саламласа И. В. Сталин çакăн пек телеграмма янă:

Сире çуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатăп. Чун-чĕререн вăй-хăл тата сывлăх сунатăп, — вĕсем Сире этемлĕхĕн тăшманне — гитлеризма çĕнтерме питех те кирлĕ. Чи ырă кунçул сунатăп».

Господин Черчилль И. В. Сталин сывлăх суннине хирĕç янă ответлă телеграмма

И. В. Сталин сывлăх сунса янă телеграмма çине господин Черчилль çакăн пек телеграммăпа ответленĕ:

«Эпĕ çуралнă кун ячĕпе çавтери ăмăн кăмăллăн тата туслăн сывлăх сунса саламланăшăн Сире чĕререн тав тăватăп. Паянхи вăхăтпа усă курса мана та çакна калама ирĕк парăр: мухтавлă вырăс çарĕ Ленинградпа Мускава çирĕппĕн хӳтĕленине пĕтĕм Британи халăхĕ çавтери пысăк хаваслăхпа сăнаса тăрать, тата Эсир Дон çинчи Ростов патĕнче тунă чаплă çĕнтерӳ пирки эпир пурте савăнатпăр».

Колхозсем çуракине хатĕрленеççĕ

ЕЛЧĔК. Юлашки вăхăтра колхозсенче производствăллă çĕкленӳ вăйлансах пырать. Авăн çапăçăн, тырă турттранăшăн ĕçкунĕсĕр пуçне натурăпа памалла тунă çĕнĕ йĕрке колхозниксемпе колхозницăсене авăн çапса пĕтерессипĕн ăмăртса ĕçлеме хавхалантарчĕ. Производствăллă çĕкленӳ вăйланса пынине çакă та аван кăтартса парать. Ноябрĕн 15-мĕшпе 20-мĕш хушшинче 524 гектар, ноябрĕн 20-мĕшпе 25-мĕш хушшинче 790 гектар, ноябрĕн 25-мĕшпе 30-мĕш хушшинче 1331 гектар çинчи тырпула çапнă.

Паянхи кун тĕлне тăватă колхозра авăн çапса пĕтернĕ. Уйрăм культурăсене çапса пĕтернĕ колхозсем, бригадăсем районра чылай.

Елчĕкри «Красное знамя» тата «Вперед» колхозсенче колхозниксене натурăпа тӳлессине кашни кунах туса пыраççĕ. «Вперед» колхозри Е. Жаркова, Л. Баймушкина, Д. Савастьянова, М. Баймушкина, Е. Трофимова тата Е. Ефимова колхозницăсем тăпачăпа авăн çапаççĕ. Вĕсем юлашки пилĕккунлăхра ĕç нормине 187 процент тултарса, кунсерен 4—5-шер килограмм тĕштырă илнĕ.

«Знамя» колхозра комбайнпа авăн çапассине аван организациленĕ. Авăн çапмалли нормăна кашни кунах иртерсе тултарса ĕçлеççĕ.

Авăн çапнине пĕр вăхăтрах районри чылай колхозсем çуракине те хатĕрленме пуçăнчĕç. Районри пур колхозсенче те çурхи тулă вăрлăхĕсене сортласа тасатса çитернĕ. «Журавлевка», «Автогигант» тата Ворошилов ячĕпе тăракан колхозсенче вăрлăхсене сортласа тасатма ятарласа уйрăм çынсем уйăрнă. Ку вăхăтчен «Автогигант» колхозра 400 центнер вăрлăх, Ворошилов ячĕпе тăракан колхозра 300 центнер тулă вăрлăхне сортласа тасатнă.

Агротехника планĕсене кашни колхоз патне çитернĕ. Агротехникăн хĕлле тумалли ĕçĕсене пурнăçа кĕртме тытăннă. Ку вăхăтчен районĕпе 200 гектар çинче юр тытнă. «Путь Ленина» колхозра 70 гектар çинче юр тытса купалантарнă. Çак колхозра юра щитсем лартса тухса купалантараççĕ. Колхозсенче плугсене 30 процент юсанă.

Çуракине хатĕрленесси, паллах, çитĕлĕкĕр. Çак ĕçе пирĕн куллен-кун вăйлатса пымалла. Ялхуçалăх специалисчĕсен те колхозсене тивĕçлипе пулăшса пымалла.

М. ПЕТРОВ.
Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

16 гектар çинче юр тытма пуçланă

Шăхасан районĕнчи Высоковка ялсоветне кĕрекен Чкалов ячĕпе тăракан колхоз авăн çапса пĕтерсенех çитес çулхи çуракине хатĕрленме тытăнчĕ. Бригадăсенче ялхуçалăх машинисене юсаса пĕтернĕ, вĕсене юр тата шыв лекмен сарайсене вырнаçтарса лартнă.

Хальхи вăхăтра колхозниксемпе колхозницăсем вырăнти удобренисем пухас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Çак кунсенче 16 гектар çинче юр тытса купалантарма тытăннă.

В. ЯКОВЛЕВ.

Удобренисемпе пĕлсе усă куракан колхозра

ИШЛЕЙ. Кăрмăшри «Осоавиахим» колхозра тĕштырă туса илес тата йышлă выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçсене пĕр-пĕринпе тачăн сыхăнтарса пыраççĕ. Çавна пула обществăллă выльăх-чĕрлĕхсен шучĕ те, тырпул тухăçлăхĕ те çулленех ӳссе пырать.

1939 çулта колхозра икĕ ферма: ĕне тата сурăх ферми пулнă. Иртнĕ çулта çĕнĕрен тепĕр ферма организациленĕ. Хальхи вăхăтра фермăсенче майракалла шултра выльăхсем 22 пуç, сурăхсем 69 пуç тата сыснасем 7 пуç шутланаççĕ. Чăх-чĕп ферми валли те чăхсем нумай туяннă. Çапла ĕнтĕ хуçалăх тĕлĕппе пысăк мар колхоз кăçал выльăх-чĕрлĕх ытларах усрама тытăнчĕ.

Йышлă выльăх-чĕрлĕх усрани тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пыма пулăшать. Колхозниксем çулсерен агротехникăна вĕренсе, хăйсен хушшинчен тырпул мастерĕсем çитĕнтереççĕ. Иккĕмĕш çул ĕнтĕ звеносенче агротехникăна лайăх пĕлекен колхозниксем ĕçлеççĕ. 60 çулти Т. Сергеев юлташ калчасене апат парас ĕçе ертсе пырать.

Колхозри ик-виç çулхи опытсем çакна кăтартса панă: минеральнăй удобренисем, вĕсене тислĕкпе пĕрле усă курсан, тырпул тухăçлăхне вăйлăн ӳстереççĕ. Çавăнпа кунта удобренисем хатĕрлес ĕç çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Удобрениле фермăсетмен пĕр участок та çук. Çавăн пекех, калчасене тĕрлĕрен удобренисемпе апат парасси йăлана кĕнĕ. Вăрлăхлăх акнă участоксене çулленех апат параççĕ. 1939 çулта кĕрхи тулă тата ыраш акмалли участоксем çине 720 лав тислĕк кăларнă пулсан, иртнĕ çулта çурхи тырăсем акмалли участоксем çине 1560 лав тислĕк кăларнă.

«Осоавиахим» колхоз иртнĕ çулта хăй пĕччен пĕтĕм районĕпе кӳрсе килес чухлĕ минеральнăй удобренисем кӳрсе килнĕ. Удобренисемпе пĕлсе усă курнине пула колхоз кăçал вăтам шутпа кашни гектартан 23 центнера яхăн урпа, 19 центнер ытларах тулă, 19 центнер сĕлĕ, 22 центнер пăрça туса илнĕ.

Тырпул тухăçлăхне ӳстерес тĕлĕшпе кăçал та иртнĕ çулти пекех ĕçленĕ. Тислĕк тăкса çемçетнĕ участоксем çинче калчасене минеральнăй удобренисемпе апат панă.

Халĕ çитес çулти вăйла тырпулăн кĕрешме тытăннă. Çак кунсенче колхоз 16 тонна сульфат аммоний кӳрсе килчĕ.

С. ГОРЛАНОВ.

Колхозсене ертсе, пулăшса пыни кирлĕ

Етĕрне районĕнчи уйрăм колхозсем авăн çапас тата государство умĕнчи обязательствăсене тултарас, çавнашкалах çитес çулхи çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе аван ĕçлеççĕ. Стрелецки ялсоветне кĕрекен колхозсем государство умĕнчи обязательствăсене срокчен тултарчĕç. Халĕ юлашки капансене авăн çапаççĕ. Авăн çапнипе пĕр вăхăтрах çуракине хатĕрленеççĕ: вăрлăхсене сортлаççĕ, ялхуçалăх машинисене юсаççĕ, удобренисем пухаççĕ.

Анчах районра чылай колхозсем авăн çапас тĕлĕшпе начар ĕçлеççĕ. Çакă вăл райçĕрĕç пайĕ колхозсене çителĕксĕр ертсе пынинчен килет. Малта пыракан колхозсен паха опычĕсене юлса пыракан колхозсене куçарма тăрăшмаççĕ. Кăкшăм ялсоветне кĕрекен колхозсенче авăн çапассине вăраха ячĕç. Колхозсенче молотилкăсемпе туллин усă курмаççĕ, колхозниксене ĕçре тĕрĕс вырнаçтарса тухма тăрăшмаççĕ.

Райçĕрĕç пайĕн задачи вăл — юлса пыракан колхозсене тивĕçлипе пулăшса, малта пыракансен ретне кăларасси пулать. Халĕ кашни колхозăн çак кунсенчех авăн çапса пĕтерессипĕн кĕрешмелле.

М. ДАНИЛОВ.

ÇУЛТАЛĂКРИ ПЛАНА ТУЛТАРНĂ

УЛАТĂР. «Красный Восток» промартель, ноябрь уйăхĕнче çулталăк планне пурнăçласа, планран ытлашши 12 пин тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

* * *

КУСЛАВККА. Çатрăкри промартель, ноябрĕн пуçламăшĕнчех çулталăк планне тултарса, планран ытлашши 8700 тенкĕлĕх продукци панă.

ХĔРЛĔ ЧУТАЙ. «Стахановец» артель, çулталăк планне ноябрь уйăхĕнче тултарса, 1700 тенкĕлĕх продукци туса кăларнă.

* * *

СĔНТĔРВĂРРИ. «Крестьянский кузнец» артель ноябрĕн 1-мĕшĕ тĕлне çулталăк планне тултарнă, планран иртерсе 169 пин тенкĕлĕх продукци панă.

Отечественнăй аслă вăрçă фрончĕсенче

Совет войскисен Мускав патĕнчи контратакисем

ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Клин енĕн çурçĕрти секторĕнче противник оборонăна куçнă, вăл окопсем чавать тата тĕрлĕрен чăрмавсем тăвать, çĕнĕ резервсем илсе пырать.

Юнашар участокра, Д. районĕнче, пирĕн войскăсем тăваттăмĕш кун ĕнтĕ контратакăсем туса тата орудисенчен персе тăраççĕ, Мускав патне пымалли çул çине çурçĕр енчен тухма хăтланакан нимĕçсен фашистла войскисен атакисене ăнăçлăн спре-сире пăрахаççĕ. Кузнецов командирăн чаçĕсенчен пĕри ĕнер тăватă яла йышăнса илчĕ. Власов командирăн боецĕсем хăйсен наступленине малалла туса пыраççĕ.

Пирĕн чаçсем хĕссе пынине чарса лартас тесе, тăшман фронтăн çак анкăр участокĕнче çапăçăва икĕ дивизие — 106-мĕш пехотнăй дивизие тата 2-мĕш пехотнăй дивизие кĕртсе янă, анчах та тăшман нимĕн те тăвайман. Ĕнер татах темиçе ял пирĕн алла куçнă. А. пункта йышăнса илессишĕн пысăк çапăçу пырать. Противникăн чĕрĕ вăйĕ тата техники питĕ нумай пĕтет. Çав ялăн районĕнче тăшманăн пехотине пĕр ротăна çити вĕлерсе пĕтернĕ, 6 вăтам танк, 5 пĕчĕк танк, 5 бронемашина, 6 противотанковăй орудди, 5 миномет тата 7 цистерна тытса илнĕ.

Волоколамск енче йывăр çапăçусем пыраççĕ. Тăшманăн дивизийĕсем, хăйсен юн нумай тăкăнинне пăхмасăрах, Мускав патнелле талпăнаççĕ. Нимĕçсем çавтери пысăк сухатусем тӳсеççĕ. Çичĕ кун хушши пынă çапăçусем хыççăн Рокоссовский командирăн чаçĕсем тăракан вырăнти участоксенчен пĕринче кăна нимĕçсен 10.224 çын вилнĕ тата аманнă. Çавăнта нимĕçсенне 22 самолет, 139 танк, тĕрлĕ калибрлă орудисене мĕнпурĕ 90 çити, 140 автомашина, 10 бронемашина, 56 мотоцикл, 34 пулемет, 35 миномет тата 15 радиостанци пĕтерсе тăкнă. Кунсăр пуçне, Рокоссовский командирăн боецĕсем 12 танк, 50 ытла автомашина, 50 мотоцикл, 5 противотанковăй тупă, миномет семпине винтовкăсем, велосипедсемпе радиостанцисем тата ытти çар снаряженийĕсем нумай тытса илнĕ.

Хальхи вăхăтра Рокоссовский командирăн чаçĕсем, тăшманран пĕр ял хыççăн тепринe турта-турта илсе, тăшмана хĕссе пыраççĕ.

Пирĕн кавалеристсем Ленинград шоссе çулĕ çинче вырнаçнă пĕр ялă йышăнса илессишĕн пысăк çапăçу туса пыраççĕ. Ĕнерхи кун хушшинче пирĕн чаçсем çав пунктăн кăнтăр-хĕвелтухăç хĕррипе нимĕçсене хĕссе кăларнă. Декабрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле çав ялăн урамĕсенче пысăк çапăçу пуçланса кайнă, çав çапăçу халĕ те пырать. Кунта кашни çурт-пăян çапăçаççĕ. Нимĕçсем кунта çĕнĕ резервсем илсе пыраççĕ, çав пункта хăйсен аллинче хăварма тăрăшаççĕ.

Можайскпа Мало-Ярославец енĕсенче малтанхи пекех хаяр çапăçусем пыраççĕ. Можайск енĕн çурçĕрти секторĕнче пирĕн чаçсем, артиллерипе минометсенчен персе тăрса, противникăн пехотнăй икĕ дивизине наступлени тума чараççĕ, çав вăхăтрах тăшмана хирĕç контратакăсем тăваççĕ, тăшмача çынсем тĕлĕшпе те, материаллă пайсем тĕлĕшпе те пысăк çухатусем тӳтереççĕ. Юлашки икĕ кун хушшинче пирĕн стрелковăй чаçсенчен пĕри хăех нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсене 1500 çыхăна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ тата 11 танк, 27 пулемет, 12 противотанковăй тупă, 14 миномет, автоматсемпе противотанковăй пăшалсем нумай тытса илнĕ.

Мускав юханшывĕн кăнтăр çыранне хĕсĕнсе кĕрсе кайнă нимĕçсен пехотине автоматчикĕсен группине пĕтĕмĕшпех пĕтерсе тăкнă.

Нумай танксем кĕртсе ярса тата авиацине анлăн усă курса декабрĕн, 1-мĕшĕнче Можайск шоссе çулĕ патĕнче нимĕçсем пирĕн войскăсем тăракан вырăна кĕрсе кайни çинчен пĕлтернĕччĕ. Кунта йывăр положени пулса тăнă. Тăшманăн пысăк вăйĕсем пирĕн войскăсен тылне кĕрсе кайнă пулнă. Нимĕçсен çак группировкине пĕтерсе тăкмашкăн Говоровпа Ефремов командирсен войскисене янă пулнă. Вĕсем тăшмана А. ялĕ патĕнче чарса лартнă, малтанхи сехетсенчех тăшманăн 15 танкне пĕтерсе тăкнă. Çак районра çапăçу икĕ кун ытла пынă. Тăшман танковăй тата мотострелковăй çĕнĕ чаçсем илсе пырса тăнă пире хирĕç хаярран çапăçнă. Пирĕн чаçсем ăнăçлăн маневрсем тунă та нимĕçсене çапса салатнă. Ĕнер пирĕн чаçсем хĕссе пыма пуçланă, тăшман чăтса тăрайман, кăнтăр еннелле нимĕн йĕркесĕр чакма пуçланă, çапăçу хирне нимĕçсен салтакĕсемпе офицерĕсем темиçе пин çын вилсе юлнă. Пирĕн чаçсем тăшмана хăваласа пыраççĕ.

Пирĕннисем противникăн вăрçă хатĕрĕсене нумай тытса илнĕ. Ефремов командирăн чаçĕсем противника Нара юханшывĕн хĕвеланăç енчи çыранне хăваласа ярса, чылай ялсем йышăнса илнĕ. Лизюков командирăн боецĕсем тăшмана Кăнтăр-Хĕвеланăç еннелле хăваласа пыраççĕ. Противник ял хыççăн ял хăварса ним йĕркесĕр чакать.

Пирĕн танкистсем тăшмана Ю. пункчĕ патнелле хĕссе пырса К. районне нимĕç автоматчикĕсенчен пĕтĕмпех тасатнă. Говоров командирăн войскисенчен пĕр пайĕ те ĕнер контрнаступлени тума пуçланă. Каялла чакакан противника хăваласа пырса, пирĕн чаçсем каç пулас умĕн чылай ялсене тытса илнĕ.

Тула енче вăйлă та хаяр çапăçусем пыраççĕ. Тăшман, нумай танксене тата пехотăна пухса тăратса, Тула хулине аякран çавăрса илме хăтланать. Пирĕн боецсем тăшманăн пысăк вăйне хирĕç çирĕппĕн тăрса вăйлăн çапăçаççĕ. Пирĕн чаçсенчен пĕри К. районĕнче нимĕçсенне икĕ батальон пĕтерсе тăкнă, 17 автомашина, мотоциклсем, винтовкăсем, автоматсем нумай тытса илнĕ. Хăшпĕр участоксенче нимĕçсем пирĕн войскăсене кăштах хĕсме пултарнă. Декабрĕн 5-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле Тулăран çурçĕр тата çурçĕр-хĕвелтухăç енче çапăçусем каллех вăйлăн пулса пынă.

Пирĕн мухтавлă летчиксем совет войскисене наступлени тума пулăшса пыраççĕ. Тăшманăн чĕрĕ вăйне тата унăн автобронетанковăй колонниссене пĕтере-пĕтере тăкаççĕ. Ĕнер сывлăшăн атака туса нимĕçсене 25 танк, 100 автомашина тата çар хатĕрĕсем тиесе пыракан 38 лава, пĕр зенитнăй батарейăна, 3 оруди пĕтерсе тăкнă, тăшманăн пехотине 700 çынна яхăн вĕлерсе пĕтернĕ.

Пирĕн чаçсем Кăнтăр фронтĕнче ăнăçлăн наступлени туса пыраççĕ

КĂНТĂР ФРОНЧĔ, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС спецкорĕ). Генерал-лейтенант Ремизов юлташ ертсе пыракан 56-мĕш армин малалла наступлени туса пырать. Ноябрĕн 27-мĕшĕнчен пуçласа, Ростов çине наступлени тума тытăннăранпах, боецсемпе командирсем — татти-сыпписĕрех çапăçура. Пирĕн çарăн пăтăрлăхĕпе хастарлăхĕ çинчен çак факт лайăх каласа парать: Хĕрлĕ Çар чаçĕсем тăшмана сывлама памасăр малалла наступлени туса, вăл хирĕç тăнине çапса аркатса пыраççĕ. Нимĕçсем, хăйсен вăйĕпе техникине çăлса хăварас тесе, Ремизовăн мухтавлă войскисене хирĕç пирĕн наступлени пуçланиччен хăйсене пачах та палăртман пехотнăй тата танковăй прикрытисем кăларса яраççĕ. Тăшман авиацийĕ, пирĕн чаçсем çине массăллăн пырса тапăнса, хăйĕн чаçĕсене йĕркеллĕнрех каялла чакмашкăн май пама хăтланать, анчах çакăн пек хăтланнинчен фашистсен командованийĕн пурĕ-пĕр нимĕн те тухмасть. Пирĕн 56-мĕш армин войскисем Таганрог сăмсахĕ пырса кĕмелли тӳрем вырăна çитсе тухрĕç. Тăшман чăтса тăраймарĕ. Çапăçусенче халран кайнă тăшман чаçĕсем тарма пуçларĕç. Каялла таракан нимĕç пехотин çулне пӳлсе Дон, Кубань, Терек казакĕсен чаçĕсем атакăна ыткăнчĕç.

Дива, Белецкий тата Воронов юлташсен авиачаçĕсем тăшман иртекен çулсене вăйлăн пыра-пыра аркатаççĕ. Нимĕçсем Таганрогран çар пурлăхне, продовольстви склачĕсемпе боеприпассене васкавлăн урăх çĕре куçараççĕ. Хуларан тухса каякан çулсем пĕтĕмпех машинăсемпе, обозсемпе тулса ларнă.

З. ХОДАКОВ.

Тăшмана сывлăш çавăрма та памаççĕ

ÇУРÇĔР-ХĔВЕЛАНАÇ ФРОНЧĔ, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Фронтăн пур участокĕсенче те пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă оборона рубежĕсене çирĕп тытса тăраççĕ. Ĕнер каçхине фронт участокĕсенчен пĕринче тăшман наступлени пуçласа ячĕ, анчах, пирĕн артиллери пит те вăйлăн персе тăнине, тăшман малалла 50 метр та кăçаймарĕ, хăйĕн окопĕсем умне пытанса выртрĕ. Нумай та вăхăт иртмерĕ, фашистсем татах та тепĕр хут малалла хирĕнсе кĕме хăтланса пăхрĕç. Анчах ку хутра та вĕсене артиллеристсемпе пулеметчиксем сывлама памасăр çунтарма тытăнчĕç. Нимĕçсем 4 хутчен атакăна кĕме хăтланчĕç. Юлашкинчен вĕсене пирĕн чаçсем хăйсем малтан йышăнса тăнă вырăна сирсе ывăтрĕç. Çапăçу хирне нимĕçсем вилнисемпе аманнисене 150 çынна яхăн пăрахса хăварчĕç. Пирĕн артиллеристсем 6 отневой тата пулеметнăй точка аркатрĕç. Саперсем 4 ДЗОТ-а взрыв туса сирпĕтрĕç.

Андреев командирăн разведчикĕсем тăшман оборонин малти речĕсем çине ăнăçлăн пырса тапăннă. Вĕсем тăшмансем патне кӳлĕ çинчи пăр тăрăх вăрттăн шăвăнса пынă та вĕсене вăйлăн пырса çапса хăйсем пурте тĕрĕсех тавăрнă.

Тинĕсре паттăррăн пырса çапни

ДЕЙСТВУЮЩИ ФЛОТ, декабрĕн 4-мĕш. (Телеграфпа). Каран çурçĕр шывĕсенче походра çӳренĕ. Вахтăра тăракан пĕрмĕш статьяри старшина Чижов 700 метр аякkарах тăшманăн подводнăй лодкин ĕмĕлкине курнă. Куçинчен командира пĕлтерсе, Чижовпа Потапов краснофлотец çав самантрах тупăсенчен пеме пуçланă. Малтан персе янă икĕ снарядах подводнăй лодкăн сăмсинчи пайне пырса тивнĕ. Унтан карап командирĕ Киреев юлташ хăйĕн карапне мĕнпур вăйпа противникăн лодки çинелле янă та, ăна караппа пырса тăрăнтарнă. Фашистсем хăйсен вилĕмне тинĕс тĕпĕнче тупнă.

(«Правда», декабрĕн 5-мĕш).

Кружоксем ĕçлеççĕ

ШАХАСАН. Шыв-Пусинчи тулăмăр вăтам шкулта вĕренӳ çулĕ пуçланасссăнах ачасем хушшинче физкультура, БГТО, БГСО, ПВХО тата ытти кружоксене те организацилеҫĕ. Халĕ шкулта ПВХО значокĕн нормине 100 процентĕпех (173 ача) панă, ГСО кружокĕн руководителĕ М. Тимофеева 9 заняти туса ирттернĕ. ГСО кружокĕнче вĕренекенсем халĕ аманнă çынсене гулăпу парас тĕлĕшпе практикăллă занятисем туса ирттереççĕ. Физкультура кружокĕ халĕ БГТО значокĕн хĕллехи нормисене пама хатĕрленет.

Кружоксенче вĕренмелли макетсене ачасем хăйсемех тăваççĕ. Халĕ 4 пулемет, 21 пăшал макечĕ туса кăтартленĕ. Кружоксене занятийĕсем расписани тăрăх йĕркеллĕ пулса пыраççĕ.

Ф. СЕМЕНОВ.

Польша республикин Министрсен Совечĕн председателĕ генерал Вл. СИКОРСКИЙ радио тăрăх тухса калани

Декабрĕн 4-мĕшĕнче 18 сехет те 30 минутăра Польша республикин Министрсен Совечĕн председателĕ тата Польшăн хĕçпăшаллă вăйĕсен главнокомандующийĕ генерал Сикорский Мускавра радио тăрăх сăмах тухса калать:

«Совет Союзĕнчи геройла халăхсене, хăйсен тăван çĕршывне Германин варварла тискер ордисенчен хăрама пĕлмесĕр тата юн тăкса сыхланаканскерсене, хĕрӳллĕн саламлатăп. Çав халăхсен çулпуçĕ Сталин çине пăхса тĕлĕнсе савăнатăп; вăл Россия оборонине план тăрăх тата пĕр иккĕленмесĕр ертсе пырать. Вăл йăста ертсе пынине халь эпĕ хамăн сăмаха Мускавран, Гитлер каланă тăрăх 4 уйăх каярахах нимĕçсен аллинче пулмалла хуларан, калани те питĕ лайăх кăтартса парать. Эпĕ хампа пĕр çĕршывра çуралнă çынсене тата, союзлă правительствăсем хушнă тăрăх, хальхи вăхăтра Польша пекех мĕскĕн кунçуллă çĕршывсенчи халăхсене те чĕнсе калатăп.

Хальхи вăхăтра этемлĕх 20 çул хушши тăсăлнă иллюзисемшĕн, нумай халăхсем хăйсене шухăш-кăмăл енчен тата материальнăй вăйсем тĕлĕшĕнчен хĕçпăшалсăрлатнăшăн тӳлесе татать, вăл ăна юнпа тата мĕнпур хуçалăх юхăнипе тӳлесе пырать. Германие вăсесĕр хĕçпăшалланма ирĕк парса, ăна хăйĕн вăрттăн пухса хатĕрленĕ çар вăй-хăвачĕпе сисмен хушăра демократиллĕ халăхсем çине пырса тапăнма май панăшăн тӳлет хальхи вăхăтра этемлĕх.

Хальхи вăрçă вăл—ку вăрçа хуттăннă государствăсен территорийĕсемпе чиккисемшĕн çеç пыракан вăрçă мар. Историре çак чи хăрушă конфликт, çакăнпа пĕрлех тата çакă пĕр-пĕтĕмĕшле революци, демократине тотализм хушшинчи, этемлĕх пурнăçĕн пĕр-пĕринпе килĕшмĕ пултарайман формисем хушшинчи, пурнăçăн е вилĕмшĕн пыракан кĕрешӳ пулса тăрать. Çак кĕрешӳре çĕнĕ те тивĕçлĕ тĕнче, ирĕклĕхе пуринчен мала хуракан ирĕклĕ халăхсен тĕнчи, тӳрĕ демократин ĕмĕр арканмăш никĕсĕ çинче тăракан тĕнчи çĕнтерĕ.

Историре ку таранчĕн пулман çар вăйне хирĕç, Виççĕмĕш империн руководителĕсем халь йышăннă тăрăх, тĕнчене çĕнтерсе илес тесе 1939 çулта капланса тухнă вăя хирĕç чи малтан Польша çĕкленчĕ.

Кĕтмен çĕртен пырса атакăланнă Польша, хăйĕн хальхи вăхăтри танксемпе самолетсем çитекĕлĕ пулман пулăн те, алла хĕçпăшал тытса хирĕç çĕкленчĕ. Çакăнпа ĕнтĕ вăл Гитлерăн ĕмĕчĕсене тăрă шыв çине кăларчĕ, Европăри ытти халăхсене компромиссăр кĕрешме пример сăтартса пачĕ, анчах та хаярран хирĕç тăнă хыççăн унăн вăрçă хирĕнче парăнмалла пулчĕ. Çапах та Польша халăхĕ халĕ те нацистсене пăхăнакан пулман-ха, поляксене темĕн пекех пусмăрласа асап кăтартаççĕ пулин те, вĕсем нихăçан та пăхăнас çук. 1939 çулта Польша халăхĕ татăклă решени йышăнни пĕр пĕтĕмĕшле мобилизацин сигналĕ пулса тăчĕ.

Чăнахах та ĕнтĕ, Польшăпа Германи хушшинчи вăрçа пынă вăхăтра Франци усă курмарĕ. Кĕске те, анчах нимĕçсемшĕн йывăр пулнă Польша кампанийĕ пирки Гитлер войскисем вăйсăрланнипе Франци тивĕçлĕ усă кураймарĕ. Анчах та ун вырăнне Великобритани, У. Черчилль ăслă ертсе пынипе, 1940 çулта хаярран хирĕç тăнине пула, ун чухне пулса пынă вăрçăн положенине çăлса хăварчĕ. Çак событисене хутшăнаканни тата вĕсене сăнаканни пулнă май, эпĕ çапла калатăп: Британи халăхĕ вăл—çирĕп ĕмĕтлĕ паттăр халăх, Германия этемлĕхшĕн мĕнле хăрушлăх кӳме пултарнине ăнланса илекен халăх пулчĕ. Историлле чи хăрушă самантсенче вăл хăйĕн питĕ вăйлă моральлĕ пахалăхне, политикăллă тата обществаллă пĕрлĕхне пĕтĕмпех кăтартса пачĕ.

Малашнехи вăхăтсенче, тен, Германия хăйĕн вăйĕсен пĕр пайне Хĕвелтухăçĕнчен хĕвеланăçнелле куçарса, вĕсене Британин утравĕсене хирĕç кăларса тăратма пултарĕ, анчах вĕсен ĕмĕчĕсем аркалса кайĕç, вĕсем типçĕр çинче те, тинĕсре те, сывлăшра та тӳрĕ-пĕрех поражени тӳсĕç.

Хĕвелтухăç фронтĕнчи малтанхи вăхăтри хăйĕн ситĕнĕвĕсене Германия сисмен хушăра пырса тапăннă пирки турĕ. Совет Союзĕ çине те вăл, ытти государствăсем çине тапăннă пекех, вăрттăн, вăрă-хурахла пырса тапăнчĕ. Анчах та Германие кунта шикленсе ӳкмен паттăр Россия, унăн талтакипе вăрçă техники, çавăн пекех тата совет халăхĕсен моральлĕ пĕрлĕхĕ кĕтсе илчĕ. Хĕрлĕ Çар халĕ ĕнтĕ нимĕçсен малтанхи хавхаланăвне çапса та çĕмĕрчĕ. Мухтаса пĕтернĕ çиçĕм пек хăвăрт вăрçă кунта—иртсе кайнă ĕç пулса тăчĕ. Вырăссен çавтери анлă çĕршывĕ, Совет Командованийĕ ăста усă курнипе, Германин хĕçпăшаллă вăйĕсене ерипен-ерипенех çăтса пырать, çав вăхăтрах советăн паттăр салтакĕпе граждăнла халăхĕ Германие тӳрленмелле марах пыра-пыра çапать; хальхи вăрçăра Германи çарĕ хăйне çакăн пек çапа-çапа аркатнине урăх курман та. Германи территорийĕсем çăварса илни ĕçе татса памасть-ха. Германия хăй палăртса хунă стратегилле тĕллевсене пурнăçа кĕртеймерĕ. Нимĕçсем ыттисене, чи малтанах хăйсене хăйсем, совет çарне эпир пĕтерсе тăкрăмăр, тесе ĕнтерееççĕ. Вăрçă событийĕсем аталанса пыни тата мана хама сăнама тӳрĕ килнĕ фактсем çаклашкал заявленисене сирсе пыраççĕ. Гитлер, типçĕр çинче мана çĕнтерекенни ку таранччен те никам та çук, тесе каланнин авторитечĕпе чапĕ шанчăксăра тухать, вăйсăрланса пырать. Кунта, çавăн пекех тата Ливире те, унăн çарĕсем, акă, çĕнтерӳ вĕсемшĕн кăна мар тивĕçлĕ пулнине часах хăйсен куçĕпех курĕç.

Малашнехишĕн те шухăшлас политикăна тытса пынине пула, Совет Российĕн çĕршыв ăшĕнче шалта та çар промышленноçĕ пур, сыпăсăлми резервĕсем пур. Кунсăр пуçне, вăл тата Великобританирен, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен вăйлă пулăшу илсе тăнине хăйĕн çитменлĕхĕсене часах тултарĕ те Гитлерăн вăрçă машинине пысăкрах та пысăкрах ăнăçлăхпа пĕтерсе пыма тытăнĕ. Вырăссен хаяр çанталăкĕ, Хĕрлĕ Çарăн çак çутçанталăкри союзникĕ, нимĕçсен танковăй дивизийĕсен вăй-халне пĕтерсе пырать. Танковăй дивизисен лару-тăрăвĕ начарланса пыни, Гитлерăн авиацийĕ çынсемпе техника тĕлĕшĕнчен пысăк сухатусем туни пекех, нимĕçсен командованине халĕ те чăмăртантармасăр тăма пултараймасть. Çак сухатусене тултарса пырасси яланах, уйрăмăнах партизанла кĕрешӳ пынă условисенче, йывăр та нумай вăхăта пыракан задача пулса тăрать. Паллă ĕнтĕ, партизанла вăрçăра вырăссем яланах хăйсен ăсталăхне палăртнă, çак хĕл хушшинче вăл татах та вăйланать.

Германия горючи çавтери нумай расходланă пирки, нимĕçсен ирĕксĕрех хăйсен мирлĕ вăхăтри стратегилле ресурсĕсене пуха-пуха илме тивнĕ. Нимĕçсем Кавказри нефть çăлкуçĕсене кирек мĕнле майпа та пулин туртса илес тесе, çине тăрсах тапаçланĕç. Анчах та вĕсем юлашки кунсем хушшинче Ростов çывăхĕнче илнĕ урок куйыту тĕлĕшпе вĕсене çине тăрсах шухăшлаттарĕ.

Демократиллĕ халăхсен пĕрлĕхлĕ хавхаланăвĕ Хĕвелтухăçĕнчи тата Хĕвеланăçĕнчи фронтсенче вăйлă контрнаступлени пуçласа ярасси патне илсе пырĕ, кунта вара Советăн çарĕпе союзра тăракан Польша войскисем те хутшăнăçĕ. Икĕ халăха пĕр тискер тăшманах хăратса тăнă кунсенче Польша салтакĕсем хăйсен тăван çĕршыв çĕрĕнче çĕкленсе кăларас тесе, сирĕнпе пĕрле паттăррăн çапăçĕç. Кунтан та ытларах, вăйлă Польша, малашне хăйĕн управленин ĕçне тапхăра тивĕçлĕ пек, хăйĕн традицийĕсене тивĕçлĕ пек туса пыма шутлаканскер, Европăри шанчăклă равновесин чи кирлĕ факторĕ пулса тăнине, историре пуçласа пĕрремĕш хут пирĕн хĕçпăшалсем тăванланни—икĕ государствăри халăхсен те пĕр-пĕрин хушшинчи малашнехи пурăнăçĕ улшăннин тапхăрне пĕлтернине Совет Российĕ ăнланса илчĕ. Ку ĕнтĕ ĕлĕкхи пек мар, туслă отношенисен никĕсĕ пулса тăрĕ. Эпир хамăр ĕлĕк пĕр-пĕрне уйăрса тăнисене пурне те манма хатĕр. Совет халăхĕсем хăйсемшĕн чи йывăр çул килсе тухнă самантра эпир вĕсемпе юнашар тăнине манмĕç, вăйлă та туслă Польша, Германие хирĕç кĕрешме тухнăскер, совет халăхĕсемшĕн кам пулса тăнине ăнланса илĕç, тесе шанса тăратпăр.

Пĕр-пĕрне шанни, çавăн пекех тата пĕр-пĕрин государствин уйрăмлăхĕсемне суверенносне хисеплени—пирĕн хушăмăрти отношенисене йĕркелеме маллă паракан пĕртен-пĕр условисем çакăн пек ĕнтĕ.

Çаксем кирлине тата вĕсем усă панине шута илсе, эпир кăçалхи июльне августа уйăхĕсенче тунă килĕшӳсене пĕтĕмпех пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлĕпĕр. Çакăнпа вара эпир тавлашуллă чи йывăр проблемăсене те хăйсен государствисен интересĕсемпе килĕшӳлĕн тата мĕнпур этемлĕхĕн ячĕпе мĕнле татса памаллин примерне пĕтĕм тĕнчене кăтартса парăпăр.

Юлашки икĕ çул хушшинче Гитлер нумай çапăçусенче çиеле тухрĕ, нумай çĕршыва аркатрĕ, нумай халăхсене чуралантарчĕ. Нумай хуласене ишĕлтерме, нумай ялсене çунтарса яма пултарчĕ. Нумай миллион çынна вĕлерчĕ вăл, амантса суранлантарчĕ, выçăпа асаплантарчĕ тата пĕр-пĕринчен уйăрса сапаласа ячĕ. Апла пулин те, Гитлер паянхи кун хăйĕн çĕнтерĕвĕнчен, çулталăк каярахри пек те мар, татах та шăçетерех тăрать. Ун чухнех вăл нимĕç халăхне, вăрçа 1940 çулта, е нумай пырсан 1941 çулта вĕçлетĕп, тесе сăмах пачĕ. Анчах та хальтерех тухса каланă сăмахĕсенчен пĕринче вăл ирĕксĕрех нумай пĕлтерекен сăмах çăвăрнăшĕ тупса, ку вăрçă хăçан та пулсан пĕтесси çинчен каларĕ.

Геббельс пропаганди, тен, халĕ ĕнтĕ çакăн майлах хăйĕн тапăнса пыракан характерне тата яланхи пек харсăр чăрсăрлăхне çухатрĕ. Германире халĕ поражени пулма пултарасси çинчен те калаçаççĕ, çавăн пек поражени пулас хăрушлăхĕсемпе халăха хăратаççĕ. Хăй тунă тискер ĕçсемшĕн ответ тытмалла пуласран хăрани Германишĕн малалла вăрçма хăвалакан сăлтав пулса тăчĕ. Çавăн пекех тата çулталăк каярах Гитлер хăйĕн Европăра тума пулнă «çĕнĕ йĕркине» пурнăçа кĕртесси те инçех мар пек туйăнатчĕ. Паян кун çак йĕрке тăпра пулса сапаланчĕ, çакăнпа пĕрлех тата юлашки кунсенче Наннитра, Бордора, Прагăра, Белградра илтĕннĕ пăшал сассисем, Грецири, Норвегири, вырăс çĕрĕсенчи варварла репрессисем, çавăн пекех икĕ çул ытла Польшăра туса пыракан репрессисем нацистсен çĕнĕ йĕркин чăн сăн-сăпачĕ мĕнлине кăтартса параççĕ. Суялăхпа ултавлăх маски татăлса анчĕ, çак маска айĕнчен тĕнче умне юнлă пусмăрлăхпа тата правасăрлăхпа пурăнакан гитлерла палачăн сăн-сăпачĕ тухса тăчĕ.

Нацистла вăрă-хурахсемпе килĕштерсе ĕçлес текен политика çав вăрăхурахсене ĕненекенсене пурне те мăшкăл тӳсесси патне çеç илсе çитерчĕ, çакă вăл чăнах та çапла иккенне кам та пулин вăхăтра тавçăрса илмесен, çав политика вĕсен хăйсен государстви пĕтĕмпех ишĕлсе анасси патне илсе çитерĕ. Гитлер, пурне те çĕмĕрсе аркатакан демон, мĕн те пулин лайăххине тума пултараймасть. Вăл мĕскере пырса тĕкĕнет, çавсем пурте тăпра, тусан пулса вĕçеççĕ; çакăн пирки вĕсен пророкĕ те çаплах калать: «Çакăн пек ĕнтĕ вăл усал ĕçсен ылханлăхĕ» тет. Паянхи Германипе килĕшӳ те, çурасу та тăвасси пулма пултараймасть.

Преступленисем туни наказанисĕр иртсе каяс çуккине килес ăрусем те ăнланчăр. Варварла идеологи законĕсене вутпа та тимĕрпе пĕтермелле.

Европа çĕрне Гитлер хăй шутланă пек мар, тепĕр майлă çеç пĕрлештерме пултарчĕ. Вăл поляка—чехпа та словакпа, югославпа, грекпа, норвежецпа, бельгиецпа тата французпа пĕрлештерчĕ, пире пурне те вара англичанинпа тата вырăспа пĕрле пĕрлештерсе, истори тин çеç куракан чи пысăк тискерлĕхе хирĕç кĕрешме çĕклерĕ. Çак кĕрешĕве кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕри—вăл эпĕ, Польша правительствин пуçĕ, пĕтĕм халăхсен тата союзниксен ячĕпе çакăнта, Мускавра, сăмах тухса калани.

Эпир, континент çинче пĕрлешсе тăракансем, 180 миллион çын шутланатпăр. Çакă хăватлă çар вăл—тăшман тылĕнче фронт туса хунипе пушшех те хăрушăрах пулать. Çав фронт халĕхе шалта пытанса тăрать-ха, анчах та вăл тăшманăн хальхи авиацирен те, танксен дивизийĕсенчен те тата тинĕс-çар флотĕнчен те пĕртте кая мар хăрушă пулса тăрать. Ăста нимĕç салтакĕн атти пырса пусать, ăста юншăн антăхакан гестапо, мораль енĕпе ытларах та ытларах çĕрсе пыракан гестапо, тискерленет, çав фронт çавăнта сиксе тухать. Пусмăрлăхри халăхсем суд кунĕ çитсе хăйĕн ĕçне тытăнасса тӳсĕмлĕн кĕтсе тăраççĕ, вăл кун вĕсемшĕн эпир суйласа илнĕ вăхăтра сехет çапсан çитĕ.

Çак вăрçă пире, поляксене, тит те нумай вĕрентрĕ, çавăнпа та эпир тачăн пĕрлешрĕмĕр, çакна пула пурте пĕр шухăшлăн пулса çĕнĕ Польшăшăн çапăçатпăр. Çав пулас Польшăн вăйĕ—кашни сынăн раса уйрăмлăхне пăхмасăр, вăл камран тухнипе мĕнле тĕнпе пурăннине пăхмасăр, пĕтĕм граждăнсем пĕртан шутланакан никĕс çинче, политикăллă, социальнăй тата хуçалăхлă демократин никĕсĕ çинче тытăнса тăрĕ. Тăшмана çĕнтернĕ хыççăн Европăри пурнăçа йĕркеленĕ чухне çав пурнăçран пирĕн халиччен пулнă партикуляризма кăларса пăрахмалла, çав партикуляризм вăл пирĕн çаманан чи пысăк никĕсĕ пулса тăрать. Германи, пирĕн хушăри партикуляризмпа усă курса, пире пĕр-пĕринне хирĕстерсе ячĕ, çак майпа ытти халăхсене чуралантарма май тупрĕ. Çĕнĕ тĕнче эпир доктринерла юридически формăсемпе мар, халăхсем хушшинче пĕр-пĕринпе тӳрĕ кăмăлтан килĕштерсе, пĕрлешсе пурăнмалли йĕркепе, тĕплĕн, лайăх шухăшласа хунă йĕркепе тăваççĕ.

Вăрçă татах та вăрăма пыма пултарать. Вăл малалла пысăкăн та нумайăн вăй хума хушать. Кĕрешекел демократин материальнăй тата моральлĕ ресурсĕсем мĕн чухлине эпĕ лайăх пĕлетĕп, ку тĕлĕшрен эпир Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсенчен те пысăк пулăшу илсе тăратпăр. Çавăнпа та эпĕ хамăр çĕнтерессе пĕр иккĕленмесĕр çирĕп ĕненетĕп: этемлĕх историйĕнче чи пысăк çĕнтерӳсенчен пĕрне туса, тĕнчене урăхлатса, çак тапхăрта килес ăрусен телейлĕ пурнăçĕ валли çирĕп никĕс хывăпăр.

СИКОРСКИЙ—Министрсен Совечĕн председателĕ, генерал».

Сывăхри Хĕвелтухăçне Америка генералĕ пыни

НЬЮ-ЙОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Канпур корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: Америкăн сывлăшпи çар вăйĕсен генерал-майорĕ Бретт Англирен Сывăхри Хĕвелтухăçне пынă, вăл кунта Америка самолечĕсене англичансем сывлăш çарне хăвăртрах çитерсе парас ĕçпе килнĕ

Генерал-майор Бретт, вăл кунта вĕрсе килнĕ чух Мальтăпа Египет хушшинче тăшманăн эсминецĕсем тата пĕр самолет унăн машини çине пени çинчен каласа панă. Бретт самолечĕ сиенленмен, анчах та, зенитнăй орудисем перекен вырăнтан хăтăлса тухас шутпа, унăн алтăн вĕрсе иртмо лекнĕ.

Цехри агитаци ĕçĕ

ÇЕМĔРЛЕ. (**Хамăр корр.**). Кăнтăрлахи апатра е кăсхи перерыв вăхăтĕнче древкомбинатри 6-мĕш номерлĕ пех столовăйĕ рабочисемпе тулать. Пуртĕ вырнаçса çитсен, столовăя хул хушшине хаçатсем кĕтернĕ çын пырса кĕрет. Ăна рабочисем аван пĕлеççĕ, вăл—цехри агитатор.

Залра шăп. Агитатор халь анчах илсе килнĕ хаçат-журналсене вуласа пама тытăнать.

— Ну, камăн ыйтса пĕлмеллисем пур? — тет агитатор, вуласа пĕтернĕ хыççăн.

— Ыйту паракансем чылай. Вĕсене агитатор кĕскен те уçăмлăн ăнлантарса парать.

— Тата кам ыйтса пĕлесшĕн?—ыйтать агитатор.

— Пурте ăнланатпăр. Сталин юлташ пире фронта пулăшассине вăйлатса пыма чĕнет, пирĕн ăна тиеçĕлĕн пурнăçламалла,—тесçĕ рабочисем.

— Тĕрĕс!—тет агитатор. — Аслă çулпуç сăмахне ответлесе, эпир çулталăк планне декабрĕн 1-мĕш тĕлне тултарма, çĕнĕ продукци туса кăларас ĕçе хăвăртрах вĕренсе çитме пултăмăр. Ман шутпа, пирĕн кашнинех ăна ик-виçшер норма тултарса пыма пĕлмелле.

Звонок перерыв вăхăчĕ пĕтни çинчен пĕлтерет. Рабочисем цеха тухаççĕ.

Çакăн пек иртет цехри рабочисен кану сехетĕ.

Юлашки вăхăтра цехра агитаци ĕçĕ уйрăмăнах лайăхланни сисĕнет. Агитаторсемпе вулавçăсем куллен-кун пехăх рабочисене Совет Информаци Бюровĕн пĕлтерĕвĕсене, фронтри боевой эпизодсене тата тылри ĕçсем çинчен те вуласа параççĕ. Çакăнпа пĕрлех вĕсем агитаци ĕçне вырăнти фактсемпе сыхăнтараççĕ.

Нумаях пулмасть инженер-агитатор Еламльев юлташ Мускав патĕнчи çапăçусем çинчен каласа панă. Ăна вăл пурне те çар ĕçне вĕрентес ыйтупа тата цехри ĕçсемпе сыхăнтарса каларĕ. Вăлах уйрăм сменăсенче производствăллă плана тултарас ĕç мĕнле пыни çинчен тата уйрăм стахановецсен чаплă примерĕсем çинчен каласа панă.

Çамрăк коммунист Шустов, диспетчер Скворцов тата счетовод комсомолка Кистанова юлташсем те агитаци ĕçне активлăн хутшăнаççĕ. Вĕсем рабочисем хушшинче юлашки эрнесенче кăна темиçешер калăçу туса ирттерцĕ, хаçатсем вуласа панă. Скворцов юлташ çак кунсенче Куславккапа Çĕмĕрле комбиначĕсем хушшинчи социализмлă ăмăрту мĕнле сарăлса пыни çинчен доклад туса панă. Кистанова рабочисене Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар параднĕнче калланă сăмаха тĕплĕн вуласа, ăнлантарса панă.

Цеха, вырăнти агитаторсемĕр пуçпе, пĕтти çĕртен те докладчиксем пыраççĕ. Сăмахран, юлашки уйăхра кунта врач Захарова — «Юн парасси çинчен», Грабинăпа Ковалева юлташсем «Отечественнăй вăрçă тата совет хĕрарăмĕ» темăсем тăрăх докладсем туса панă.

Агитаци ĕçĕнче цехра тухса тăракан стена хаçачĕ те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Хаçат кашни номертех ăмăртура малта пыракансен ĕç опычĕсене çутатса парать. Чи лайăх стахановецсем пек ĕçлеме чĕнет.

Цехри уйрăм рабочисем ĕç нормисене епле тултарса пынине куллен кăтарту хăмисем çине çырса пыраççĕ. Çакă вара рабочисен ĕçри хастарлăхне чылай çĕклет. Кашни рабочине работница, хăйĕн ĕнерхи ĕç тĕслĕхĕсене курса, ыран татах та лайăхрах ĕçлеме тăрăшать.

Ултăмĕш номерлĕ цехра агитаци ĕçне кирлĕ пек организацилени цех коллективне пысăк ситĕнӳсем тума пулăшать. Вăл çакăнтан лайăх курăнать: цех коллективĕ кашни уйăхрах хăйĕн программине ирттерсе тултарать, ĕç тухăçлăхĕ те ӳссе пырать. Паянхи куна цехра нормăна тултарса пырайманнисем çук, чылайăшĕсем ĕç нормисене 2—3 хут ирттерсе тултараççĕ. Сăмахран, Д. Будачев, С. Павлов, К. Большаков, П. Акаемова, Е. Чуракова, М. Иванов юлташсем, вăтамран илсен, кашни кунах 2—3-шер норма тăваççĕ. Вĕсен ячĕсене куллен кăтарту хăми çинче курма пулать.

Цехри рабочисемпе работницăсем Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада анлăн сӳтсе-явăрĕç. Аслă çулпуç ĕççыннисене фронта пулăшассине вăйлатса пыма чĕнни çинче кашни рабочи стахановла ĕçпе ответлет. Вĕсем çулпуç сăмахĕсемпе хавхаланса, кунĕн-çĕрĕн цехран тухмасăр ĕçлеме, мĕнпур вăйсене заданине вăхăтра пурнăçланă çĕре пама тăрăшаççĕ. Пур заказсене те пысăк пахалăхпа тата срокра туса кăларасси, çулталăк планне декабрĕн 1-мĕшне тултарасси—çакăн пек обязательство илнĕ цех коллективĕ юратнă учитель Сталин юлташ докладне сӳтсе-явнă хыççăн. Ăна вĕсем ăнăçлăн пурнăçласа пĕр икĕленмесĕрех шанма пулать.

Хĕрлĕ Çара пулăшасси— комсомолецсен чи пысăк тивĕçĕ

ЧКАЛОВСКОЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Районри комсомол пуçламăш организацийĕсеннен нумайĕшĕсем Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем пухаç ĕçе активлăн хутшăнаççĕ. Тутар Сăкăтри комсомолецсем пурте çăматă, çăлăк тата ытти çавăн пек таха япаласем панă. Комсомол организацин секретарĕ Валеев юлташ пĕр мăшăр çăматă, сурăх тирĕ тата мулахăй парнеленĕ. Кунти комсомолецсем ăшă тумтирсем пухакан комиссине ĕçре куллен пулăшса пыраççĕ, фронта пулăшма кирли çинчен колхозниксене ăнлантарса параççĕ.

Нариман ячĕпе тăракан колхозри çамрăксем те Хĕрлĕ Çара пĕтĕм вăйăпа пулăшма тăрăшаççĕ. Комолецсенчен пĕри те тăван çĕршыв валли ăшă япала памасăр юлман. Нумайĕшĕсем пĕрер тир, чăлхасем, алшăшсем панă.

Анчах районра çак кирлĕ ĕçе хаклăн тăвайман хушшинче,—тесе кăшкăрса калас килчĕ манăн ăна.

Акă хăçан куртăм эпĕ, яр-уççăн, витĕр куртăм, нимĕç пире мĕн парассине: пĕкĕрĕлсе хуçалнă çурăмлă пурнăç парассăн вăл пире.

Юлташ! Пилĕк сехет тăрса юлчĕ тул çутăласси. Пилĕк сехетрен эпĕ çапăçăва кĕретĕп. Çав малта курăнса пыртакан тĕссĕр сăртшăн мар çапăçатăп эпĕ нимĕçпе. Пысăкраххишĕн пыратъ çапăçу. Ман пурнăçăн хуçи хам пулмалла: эп хам-и е нимĕç? — çак ыйтăва татса парасси пирки пырать çапăçу.

Ку вăхăтчен эпир—эс те, эп те, пурсăмăр та—кашни харпăрхăй шăпин хуçи пулнă. Эпир хамăра валли ĕçе—пĕлнĕ тăрăх, профессине—чи туртнă тăрăх, сарлă мăшăрсене—чĕре юратнă тăрăх суйласа илнĕ. Эпир, ирĕклĕ çĕр çинчи ирĕклĕ çынсем, ыранхи кун çине нимĕн хăрамасăр пăхнă. Пĕтĕм çĕршыв—Тăван çĕршыв пулнă, кашни çуртра юлташ пурăннă. Кашни професси хисеплĕ пулнă, кашни ĕç чыслă та мухтавлă пулнă. Эсĕ çакна пĕлсе тăраттăн: эсĕ шахтăра алтса кăларнă çĕркăмрăкĕн кашни тонни сана мухтав, хисеп, награда парать. Эсĕ колхоз уйхирĕнче ĕçлесе тунă тырăн кашни центнерĕ санăн пуянлăхна, санăн çемьери пуянлăхна ӳстерет.

Анчах та ак нимĕç килет. Вăл санăн шăпун хуçи пулса тăрастăн. Вăл санăн Паянхи Кунна таптаса тăкса Ыранхи Кунна туртса илесшĕн. Вăл санăн пурнăçупа, санăн кил-çуртупа, семйупе пуç пулса тăрасшăн. Вăл сана килĕнтен хăваласа кăларма пултарать, вара сан ирĕксĕрех, пуçна пĕкĕсе, çумăрпа йĕпе-сапа çанталăк витĕр тăван килĕнтен тухса каяс пулать. Вăл сана вĕлермесĕн те пултарать, ăна ĕç выльăхĕ кирлĕ—вара сан асат хуçнă пек хуçăк çурăмлă чура пулса тăрас пулать. Ун чухне эсĕ центнер тырă ĕçлесе тăвăн та—ăна вăл туртса илĕ, сана выçă тăратса хăварĕ. Эсĕ тонни-тоннипе кăмăк чавса кăларăн, анчах ăна та пĕтĕмпех вăл туртса илĕ, çитменнине санах: «Эх, вырăс сысни, начар ĕçлегĕн!»—тесе вырçĕ. Эс уншăн яланах юмахри Кукша Иван пек нимĕн хисепсĕр çын, машкăлри çын пулăн. Вăл сана хăвăн ăçусен чĕлхине, шухăшлама, ĕмĕтлеме вĕреннĕ тăван чĕлхене, чи пирвайхи юрату çинчен çавнă хĕре калаçа панă чĕлхене ирĕксĕрлесе мантарĕ. Вăл сана йытăлла вĕрмелли нимĕç чĕлхине вĕрентĕ, унтан вара эс ют чĕлхене епле хуçкаласа калаçнинчен кулса пурăнĕ.

Вăл санăн мĕнпур ĕмĕтӳсене таптаса тăрĕ, мĕнпур шанчăку çине ирсĕр сурчăк сурса тултарĕ. Эсĕ хăвăн юратнă ывăлу ӳссе çитсен ученăй, инженер, çĕр çинчи чаплă çын пулать тесе ĕмĕтленеттĕн, анчах нимĕçе вырăс ученăйĕсем кирлĕ мар, вăл хăйĕн ученăйĕсене те йыт вити пек лагерьсенче çĕртсе пĕтерчĕ. Ана тăмсай этемсем—ĕç выльăхĕ кирлĕ, çавăнпа вăл санăн ывăлна ачалăхран та, яшлăхран та, пуласлăхран та тӳрех уйăрса çăварлăхласа утланĕ те, майĕнчен сӳсмен кăлармасăр ĕçлеттерĕ.

Эсĕ хăвăн пике пек хитре хĕрачуна савса пăхса пепеклесе ӳстеретĕн; мăçе хутчен эсĕ хăвăн арăмупа пĕрле пĕчĕкçĕ Маринкăн шурă кровачĕ çине сĕмкăне-пĕмкăне пăхса, унăн пулас телейĕ çинчен ĕмĕтленмен-ши? Анчах нимĕçе таса вырăс хĕрĕсем кирлĕ мар. Вăл санăн чипер Маринкуна, пике пек хитрескерне, отличницăна, намăс çуртне, йĕркерен тухса кайнă салтаксене йăпанса пурăнма кайса хупĕ.

Эсĕ хăвăн арăмупа савăнса мухтанăттăн. Пирĕн пĕтĕм рудникĕпе те Оксана пек хĕр çукчĕ. Сана пурте хапсăнатчĕç. Анчах чуралăхра çынсем авланмаççĕ, çамрăкланмаççĕ. Хăвăртах ватăлса карчăк пулĕ санăн Оксану. Хуçăк çурăмлă карчăк пулса юлĕ.

Эсĕ хăвăн хаклă аçупа аннӳне хисеплесе пурăнтăн, — вĕсем сана тăрантарса ӳстернĕ. Çĕршыв сана аçупа аннӳне ватлăхри кунсенче лăпкă та хисеплĕ пурнăçпа пурăнакан тума пулăшрĕ. Анчах нимĕçе ватăлнă вырăс çыннисем кирлĕ мар, вĕсен ĕç выльăх хакĕ çук, çавăнпа та нимĕç сана аçупа аннӳне валли ху ĕçлесе тунă центнер тырăран пĕр грамм та памасть.

Тен, эсĕ çак пурнăçа чăтса иртĕрĕн, тен, вилеймĕн, тен, тăмсайланса кайнине пула ку йĕркепе килĕшĕн те, нимĕне курмасăр, пĕр савăнăçсăр выçăллă-тутăллă пурнăçпа пурăнăн?!

Мана ун пек пурнăç кирлĕ мар! Çук, кирлĕ мар. Кирлĕ мар! Ун пек пурнăçпа пурăннинчен вилни лайăхрах! Мăя сӳсмен тăхăнтарса çӳриччен пыртан штыкпа тирччĕр луччĕ. Чура пулса пурăнничен герой пулса вилем луччĕ!

Юлташ!

Виçĕ сехет юлчĕ тул çутăласси. Манăн шăпам хам аллăмра. Штык вĕçĕ çинче манăн шăпам, унпа пĕрлех ман çемьен, ман çĕршывăн, ман халăхăн шăпи.

3

Юлташ!

Паян кăнтăрла эпир виççĕмĕш ротăри боеца Антон Чувырина персе вĕлертĕмĕр.

Полк тăват кĕтеслĕ пысăк алкарти пек карталанса тăчĕ, таврана йывăр пĕлĕтсем тăмарса илчĕç; сарăхса кайнă çулçăсем чĕтренсе пылчăк çине ӳкеççĕ; пирĕн строй нимĕн хускалмасăр тăрать, пĕри те вырантан сикленмест.

Антон Чувырина, мĕскĕн чунлă хăравçă этеме, сутăнчăк дезертира пирĕн ума пиçиххисĕр шинел тăхăнтарса, аллисене хыçалалла сыхса илсе тухрĕç. Унăн куçĕсем йĕри-тавралла кăна хăравçăн пăхаççĕ, пире куçран пăхма хăяймаççĕ. Вăл пирĕн умра, юлташсем умĕнче тăмашкăн та хăрать, пире сутнă-ске-ха!

Ĕмĕтленнĕ-ши вăл нимĕç çĕнтерессе? Çук, çук, пур вырăс сынни пекех, паллах, ĕмĕтленмен. Анчах та вăл мулкач чунлă та чăх чĕреллĕ çын пулнă. Вăл та, тен, пурнăçпа вилĕм çинчен, хăйĕн шăпи çинчен шутланă пуль. Хăйĕн малашнехи шăпи çинчен вăл çапла шухăш тунă: «Манăн шăпам—хамăн тирĕме сыхласси».

Ăна хăйĕн хăй чеен шутланă пек туйăннă: «Пирĕн çĕнтерессĕн—лайăхран та лайăх. А эпĕ как раз хам тире сыхласа хăвартăм. Нимĕç парăнтарсан та нимĕн те тума çук. Вара нимĕç патне чурана каятăп. Каллех ман тирĕм хампа пĕрлех пулать».

Вăл меллĕ вăхăтчен кĕтсе ларастăн пулнă, вăрçăран тарасшăн пулнă,—вăрçăран тарса хăтăлма пулать тесе шутланă пек. Вăл хăйпĕн, хăйĕн шăпишĕн хăй çапăçса вилес вырăнне, юлташĕсене çапăстарса вĕлерессĕн пулнă.

Эх, улталантăн та иккен эс, Антон Чувырин! Эсĕ йывăç тĕмĕсем хыçне пытанса выртсан, никам та саншăн тăрса çапăçас çук. Кунта кашни хăйăн тата Тăван Çĕршывăн çапăçать! Хăй çемьишĕн тата Тăван Çĕршывăн! Хăйĕн шăпишĕн тата Тăван çĕршыв шăпишĕн! Туртса уйăрăйман, илтетĕн-и, туртса уйăрăйман эс пире тăван çĕршывран: юнпа, чĕрепе, чĕрĕ ӳтпе пĕр-пĕтĕмлĕй ӳссе ларнă эпир унпала. Унăн пулас шăпи—пирĕн п»

Юлашки 4-мĕш страницăра

ĔÇШĔН ХУШСА ТӲЛЕÇÇĔ

ЧКАЛОВСКОЕ. (**«Чăваш Коммуни» корр.**). Партипе правительство колхозниксене ĕçшĕн хушса тӳлесси çинчен йышăннă постановлени районри колхозсенче тырпул тухăçлăхĕпе выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне нихăçанхинчен те вăйлăн ӳстерме пулăшрĕ.

Кзыл Чишмари «Маяк» колхозăн 4-мĕш бригади (бригадирĕ М. Сыраев юлташ) вăтам шутпа гектартан 14,5 центнер сĕлĕ туса илме палăртнă. Çуракине тата тырпула пухса кĕртес ĕçсене вăхăтра туса ирттернине пула, бригада гектартан 28 центнер сĕлĕ пуçтарса илнĕ. Ку бригадăри пур звенosен те тырпул тухăçлăхĕ планпа пăхнинчен чылай пысăк. Виççĕмĕш звено сĕлĕ 14,5 центнер выраннe 28,17 центнер пуçтарса илнĕ. Партипе правительство постановленийĕ тăрăх звенона 56 центнер сĕлĕ хушса тӳлеççĕ. — Пирĕн çĕршывра ĕçшĕн тивĕçлипе тӳлеççĕ, лайăх ĕçĕн хакĕ те пысăк,—тет звеновод З. Садриева юлташ.

Çавăн пекех тырпул тухăçлăхне ӳстернĕшĕн 1-мĕш звено (звеновод Садыринова юлташ) 52 центнер сĕлĕ, 2-мĕш звено (звеновод Сатыкова юлташ) 13 центнер сĕлĕ, 4-мĕш звено (звеновод Былданова юлташ) 14,87 центнер тулă илет.

Коммунист Тагир Латыпов юлташ ертсе пыракан 2-мĕш бригада тырпула вăхăтра акса, лайăх пуçтарса илнипе пĕрлех агротехника ĕçĕсене те кирлĕ пек туса пынă. Çавна май бригадăн тырпул тухăçлăхĕ пур культурăсем тăрăх та планпа пăхнинчен чылай пысăк пулнă. Сăмахран, вăтам шутпа гектартан 15,5 центнер вырăнне 24,5 центнер сĕлĕ туса илнĕ.

Чылай колхозсенче фермăра ĕçлекенсене выльăх-чĕрлĕх продуктивноçне ӳстернĕшĕн партипе правительство йышăннă постановлени тăрăх хушса тӳлеме тытăнчĕç.

«Çăлтăр» колхозри дояркăсем сĕт суса илмелли 9 уйăхри плана ытлашшипех тултарнă. Клавдия Мясникова дояркăн план тăрăх 6.491 литр сĕт суса илмелле пулнă. Вăл 8.110 литр суса илнĕ. Плана ирттерсе тултарнăшăн Мясникова юлташа 242 литр сĕт тивет. Çавăн пекех сĕт суса илмелли планăн задание ытлашшипех тултарнă Мария Плешкова доярка 209 литр сĕт илет.

«Звезда» колхозри Мацеев юлташ выльăхсене пăхса усрас ĕçре чылайранпа ĕнтĕ ĕçлет. Вĕсенчен вăл çулран çул ытларах тупăш илет. Кăçал вăл хăйне çирĕплетсе панă сурăтсенчен 54 путек вырăнне 73 путек пăхса ӳстернĕ, 168 килограмм вырăнне 233 килограмм çăм илнĕ. Ĕçшĕн хушса тӳлемелли закон тăрăх Мацеев юлташа 5 сурăх тирĕ, 3,5 килограмм çăм тивет. Сталин ячĕпе тăракан колхозри Алексей Толстов юлташ та 4 сурăх тирĕ, 3 килограмм çăм илет.

«Çăлтăр» колхозри Семен Рыбаков юлташа сурăхсенчен çăм илмелли планлă задание ирттерсе тултарнăшăн 4,5 килограмм çăм хушса тӳлеççĕ.

Ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ

Кибечкассинчи (Ишлей р.) «Большевик» колхоз уйăри тырпулсене районри малта пыракан колхозсемпе пĕр вăхăтрах йĕркеллĕ пуçтарса кĕчĕ. Вырса çыхнă кĕлтесене çийĕнчех капана хыврĕ, çавăн хыççăнах авăн çапма тытăнчĕ.

Кăçал, пĕлтĕркинпе танлаштарсан, чылай пысăк тухăçлă тырпул туса илнĕ.

Колхозра ялхуçалăх ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ. Халĕ икĕ сменăпа хĕрсех авăн çапаççĕ.

Колхоз выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес тĕлĕшпе те начар мар ĕçлет. Колхозра тăвăтă ферма. Çаз фермăсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетмелли плансене тултарнă.

Кăçалли çул выльăхсен продуктивноçĕ чылай ӳсрĕ. Мария Степанова хăйне çирĕплетсе панă 4 сысна аминчен çулталăк хушшинче 80 çăвăр илсе пăхса çитĕнтернĕ. Çакăншăн Степанова икĕ сысна çури илнĕ.

А. МИХАЙЛОВ.

Вăрлăхсене мĕнле пăхса усрамалла

Халĕ республикăри пур колхозсенче те вăрлăх фончĕсем тăваççĕ. Вăрлăх фончĕсене тăвасси тата вăрлăхсене лайăх пăхса усрасси пысăк ĕçсенчен пĕри шутлса тăрать. Акса кăварма чи лайăх, сортлă вăрлăхсем уйăрса хумалла. Хĕл вăхăтĕнче е çуркунне вăрлăхсем пăсăласран, çавнашкалах пĕтересрен сыхласа тăмалла.

Пуринпĕн те палла, акмалли вăрлăх типĕ, таса, шултра пулма кирлĕ. Чĕрĕ тата тасатман вăрлăх кĕлетсенче хăвăрт пăсăлма пултарать. Тырпулсене усракан амбарсемпе складсене малтан дезинфекци тумалла. Дезинфекци тумалли шĕвеке çакăн пек майпа хатĕрлеççĕ: икĕ килограмм сӳнтернĕ известь илсе 5 литр шыв çинче ирĕлтереççĕ, ун хыççăн çав шĕвек çине пĕр килограмм краççин ярса тĕплĕн пăтратаççĕ. Çак шĕвекпе вара амбар е склад стенисене, юписене тата ытти-сене те шуратса тухаççĕ. Çуртийĕрти пĕр тăваткăл метр валли çур литр шĕвек кирлĕ. Амбарсемпе складсен урайĕсене кăна сӳнтернĕ известь шĕвекпе сĕрсен авăн. Известь типсе çитнĕ хыççăн ăна хырса, урайне таса пăлаççĕ. Кун пек тума май килмен чухне урайне вĕри шывпа çумалла.

Амбарсемпе складсене таса та йĕркеллĕ тытса тăма кирлĕ. Алăк патĕнче урана хырса тасатмалли пулмалла. Амбарсемпе складсене ытлашши çын кĕрсе тухасран сыхланас пулать. Склад уйăнне тăтăшах шăлса, склад тавраш-не те таса тытса тăмалла.

Типĕ те уяр кунсенче склад алăкĕсене уçса тăратмалла. Пӳлмесенчи пĕр сортлă вăрлăха тепĕр сортпа хутшăнтарасран сыхланас пулать. Пӳлмесенчи вăрлăх хулăмĕшĕ икĕ метртан мала пулмалла мар. Вăрлăхсене михĕсенче усранă чухне михĕсене ултă рет, хĕллехи вăхăтра сакăр рет хурса кушалама юрать.

Амбарсемпе складсенче вăрлăх мĕнле выртнине тăтăшах тĕрĕслес пулать. Çавăнпа вăрлăха тĕрлĕрен сийрен илсе тĕрĕслемелле.

Вăрлăхсене тĕрĕс пăхса усрас тесен, температура мĕнле пулнине сăнасах тăрас пулать. Вăрлăх ăшĕнчи температура хăпарни вăрлăхшăн сиенлĕ. Çавăнпа вăрлăх вĕрилесен ăна сеялка е сортировка витĕр кăлармалла. Склада сыпăш кĕрсе тăмалла тăвас пулать, е вăрлăха çухе сийпе сармалла та кирлĕ температура пулса çитиччен-нех кĕреçене пăтратса тăмалла.

1942 çулта вăйлă тырпул туса илесси вăрлăхсене хĕл вăхăтĕнче тĕрĕс пăхса усранинчен те нумай килет. Çавăнпа кашни колхозрах вăрлăхсене лайăх пăхса усрассишĕн кĕрешмелле.

П. ТИТОВ.
Чăвашсен Государство селекци станцин научнăй руководителĕ.

ДВУХСОТНИКСЕМ

Çĕмĕрлери «Большевик» заводри рабочисем отечественнăй вăрçă пуçланичченех тата начар мар ĕçленĕ. Вĕсенчен чылайĕшĕсем ĕç нормисене пĕрре сурăе ытларах та ирттерсе тултарса пынă. Кашниех хăйне панă задание мĕнле те пулсан лайăхрах, тĕплĕнрех пурнăçа кĕртме тăрăшнă.

Çынçиен фашистсем пирĕн тăвансĕршыв çине вăрă-хурахла килсе тапăннă хыççăн рабочисен ĕçри хастарлăхĕ, тăшмана курайманлăхĕ татах та ытларах ӳсрĕ. Аслă Сталин пĕтĕм ĕççыннисене фронта пулăшса пыма чĕнсе каланине вĕсем çапла ответлерĕç: «Эпир хамăра фронтри боецсем пекех шутлатпăр. Тăван Хĕрлĕ Çара, çĕршыва мĕн кирлĕ, çавна туса парассишĕн пĕтĕм вăя, пултарулăха кураттăр», терĕç.

Унтанпа 4 уйăх ытла иртрĕ ĕнтĕ. «Большевик» заводри Никхлаев юлташ ертсе пыракан цехри стахановецсем хăйсен сăмахне тĕрĕри пурнăçа кĕртсе пыраççĕ. Цехра кунĕн-çĕрĕн кĕрӳллĕ ĕç вĕрессе тăрать. Рабочисем сменисменипе, талăкĕпе цехран тухмасăр ĕçлеççĕ, стахановла ĕçне фронта пулăшаççĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем ĕлĕхи ĕç нормисене танлаштарса пăхма çеç асе илеççĕ. Вĕсемшĕн халиччи ĕçĕн виçшер çук. Заказ панă, ăна мĕнле те пулин васкавлăрах пурнăçа кĕртмелле.

Çак уйăхăн малтанхи кунĕсенче цехра пуху пулса иртрĕ. Унта умра тăракан задачăсем çинчен сӳтсе-явăрĕç. Цех начальникĕ рабочисене ĕçри хăвăртлăхсене ытларах ӳстермелли çинчен каларĕ.

— Эпир халь васкавлă заказсем тăватпăр,—терĕ вăл.—Кашни рабочин хăйăн участокĕнче тӳррĕн, ответлăха туйса ĕçлени кирлĕ. Ман шутпа эпир ку заказа та срокчен тултарма пултăпăр.

Пуху нумай тăсăлмарĕ. Мĕншĕн тесен ыйту шуриншĕн те ăнланмалла. Рабочисем заказа срокчен пурнăçа кĕртме обязательство илчĕç.

Кун хыççăн кун иртрĕ. Çĕнĕ ĕçре куллен çĕнĕ çынсем палăрма пуçларĕç. стахановла движени татах та ăнлăн сарăлса кайрĕ. Уйăрăм стахановецсем хăйсен ĕç тухăçлăхне икĕ-виçĕ хут ирттерсе тултарма тытăнчĕç. Токарь Баранов, тимĕрçĕ Кузьмин, слесарь Михуткин юлташсем малтанхи кунсенчех хăйсен ĕç нормисене икĕ хут ытла ирттерсе тултарчĕç. Юлашки кунсенче вара виçшер норма тума пуçларĕç.

Василий Михуткина, 30 сехет хушши цехран тухмасăр ĕçленĕ хыççăн, канма янă пулнă. Анчах вăл канман, килте 4 сехет пулнă та каллех цеха пынă.

— Васкавлă заказ, канма вăхăт çук. Уйăран ăна пурнăçлатăп, çавăн чухне канма пултаратăп. Юлташсем фронтра пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçнă вăйăра эпĕ кунта алла ӳссе ларма пултараймастăп,—тенĕ вăл, васкавлăн ĕçе тытăнса.

Михуткин юлташ октябрь уйăх планне 225 процент тултарнă, ноябрь уйăхĕнче плана вăл татах та ытларах тултарса пырать.

Токарь Федор Индрлков икĕ çул каялла ФЗУ шкулĕнчен вĕренсе тухнă. Кăçалхи çулччен вăл III-мĕш разрядпа ĕçленĕ. Çамрăк рабочие октябрь уйăхĕнче, ĕçре лайăх тĕслĕхсем кăтартнăшăн, 6-мĕш разряда куçарнă. Вăл октябрь уйăх планне 375 процент тултарнă, ноябрьте татах та ытларах тултарать.

— Вăл пирĕн двухсотник мар ĕнтĕ, пулас пятисотник,—терĕç ун çинчен цехри рабочисем.

А. Закалюкина Кацеев юлташсене пĕтĕм завод коллективĕ пĕлет. Вĕсем çинчен пухусенче те, канашлусенче те каласаççĕ, вĕсенчен пример илсе ĕçлеме чĕнеççĕ. Хастарлă стахановецсем ялан икшер норма туса ĕçлеççĕ. Октябрь уйăхĕнче вĕсем, вăтамран илсен, кашни кунах нормăна 230-шар процент ытларах тултарса пынă, халĕ вĕсем кунĕн-çĕрĕн производствăран тухмасăр виçшер норма тултарса ĕçлеççĕ.

Производствăра стахановла ĕçленипе пĕрлех вĕсем обществăллă ĕçе те активлăн хутшăнаççĕ. Кашни кунах рабочисене хаçатсем çинчи статьисене, Совет Информаци бюровĕн пĕлтерĕвĕсене вуласа параççĕ. Вĕсем Сталин юлташ Мускав Совечĕн чаплă ларăвĕнче тунă доклада тата Хĕрлĕ Çар параднĕнче калланă сăмаха рабочисемпе сӳтсе-явнă.

Юлашки вăхăтра электросварщик Н. Кудакин, слесарьсем С. Моторин, А. Романов, И. Белов юлташсем те нормăсене 2,5—3 хут ирттерсе тултарма пуçларĕç. Васкавлă заказа вăхăтра пурнăçлас тесе, вĕсем те 20—30 сехет хушши производствăран тухмасăр пысăк хăвăртлăхсемпе ĕçлерĕç.

Комсомолец Н. Денисовпа С. Карокалов ку таранчен слесарь пулса ĕçленĕ. Цеха васкавлă заказ тума парсан, вĕсем иккĕшĕ те хăйсен ирĕкĕпе, ĕç вăйĕ çитмен çĕре молотобоец пулса ĕçлеме килĕшрĕç. Ку ĕçре те вĕсем нормăсене ытлашшипех тултарса пычĕç.

Стахановецсен çакăн пек хавхаланупа ĕçлени цех коллективне çĕнĕ çĕнтерӳсем тума пулăшать. Коллектив кашни уйăхра хăйне панă плана ирттерсе тултарать, ытларах продукци туса кăларнипе гитлерла захватчиксене кăвăртрах çĕмĕрсе тăкма Хĕрлĕ Çара пулăшать. Цех коллективĕ сентябрь уйăхĕн планне 164 процент, октябрь уйăхĕн планне 179 процент ытла тултарнă, çак уйăхра та васкавлă заказа планпа палăртнинчен икĕ кун малтан пурнăçланă.

— Пирĕн рабочисем фронта пулăшассине куллен вăйлатса пыма тăрăшаççĕ. Цехри рабочисем пурте нормăсене ирттерсе тултараççĕ, вĕсенчен стахановецсем 63 процент шутланаççĕ, — тет цех начальникĕ Н. Николаев юлташ.

Цех коллективĕ, халь тунă çитĕнӳсене çирĕплетсе, татах та пысăкрах ӳсĕмсем тăвассишĕн кĕрешет. Паянхи двухсотниксемпе трехсотниксем çитес вăхăтра четырехсотниксемпе пятисотниксен ретне тăрассине шанмалла.

Хар. ЛИСИН.
Çĕмĕрле.

Медсестрасем хатĕрлеççĕ

ÇĔМĔРЛЕ (**«Чăваш Коммуни» корр.**). РОКК райкомĕ медицина сестрисем хатĕрлес тĕлĕшпе паха ĕçсем туса ирттерет. Паянхи куна районĕпе медсестрасем тата сандружинницăсем хатĕрленĕн курссем 3 вырăнта ĕçлеççĕ, ĕçсенче пĕтĕмпе 86 çын вĕренет.

Занятисене квалификацийлĕ врачсем ирттереççĕ. Пĕрремĕшпе иккĕмĕш группăсенче занятисем вĕçленчĕç те ĕнтĕ, халĕ унти курсанткăсем—практикăра. Виççĕмĕш группа «Большевик» завод çумĕнче ĕçлет. Унта 30 çын вĕренет. Занятисем эрнере 4 хут пулса иртеççĕ.

Курсенче занятисем ĕç хыççăн, производствăран уйăрăлмасăр пулса иртеççĕ. Вĕренме работницăсем, стахановкăсем, служащисемпе учительницăсем çӳреççĕ.

Хĕвелтухăç фронтĕнчи кĕрешӳ çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Хĕрлĕ Çăрăн кăнтăрти ăнăçлă кĕрешĕвĕ çинчен тата Мускав патне пымалли вырăнсенчи геройла çапăçусем çинчен Америкăри пичет питех те хавхаланса çырать. «Нью-Йорк таймс» хаçат совет войскисем Кăнтăрта малалла наступлени туса пыни çинчен пĕлтернисене пĕрремĕш страницăра пичетлесе кăларнă. Пĕлтерӳсене çакăн пек заголовоксем панă: «Ростов районĕнче нацистсене хăваласах пыраççĕ. Вырăссем малалла хĕсеççĕ. Нимĕçсем Таганрог патĕнче танатана пырса çаклаççĕ».

«Нью-Йорк таймс» хаçат хăйĕн умстатьине «Казаксем татах утсем çинче» тесе заголовок панă. Çав статьяра çапла каланă: кучухнехи вăрçăра механизациленĕ вăйлă çар хатĕрĕсемпе усă кураççĕ пулин те, утлă çар чăсĕсем пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Вырăссем кавалерин пысăк чăсĕсене туса хунă, çапăçура вĕсем çав чăссемпе пĕлсе усă кураççĕ. Наполеон вăхăтĕнчи пекех, Россинăра кавалери анлă фронтпа наступлени туса пырать пулсан, противникăн каялла чакма питех те хăрушă. Ростова тытса илнĕ хыççăн совет кавалерийĕ пысăк утăмсемпе çурçĕрелле тата хĕвеланăçнелле ытканчĕ. Нимĕçсем оборонăн çĕнĕ линийĕсене туса хума ĕлкĕриччен вĕсем çине кавалери вăркăнса çитрĕ. Таганрог аннелле 40 миль тăршшĕнче мĕнле те пулин пунктра оборона организацилеме нимĕçсен арьергарчĕсене совет кавалерийĕ нимĕнле май та памарĕ. Совет войскисем тытса илнĕ трофейăсен хисепне шута илсен, совет войскисем нимĕçсене питех те вăйлăн хĕссе пыни курăнать.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн обозревателĕ Маккормик çапла çырать: нимĕçсем хăйсем Ростовран чакса тухни çинчен малтан ăнлантарса панине çĕнĕрен пăхса тухнă. Халĕ ĕнтĕ нимĕçсем Ростов хулинчен граждăнла халăха тавăрас тесе чакса тухни çинчен текех калаçмаççĕ, халĕ вĕсем хăйсен войскисем «усăллăрах позицисене» чакса йышăннă, тесе ĕнентерме пăхаççĕ. Иккĕленмелли çук, Ростоври граждăнла халăх нимĕçсене хирĕç, Совет Союзĕн мĕнпур территорийĕ çинчи халăхсем кĕрешнĕ пекех, кĕрешнĕ. «Вырăссен фрончĕ,—тесе çырать Маккормик,—ытти çĕрти фронтсенчен граждăнла халăх хăйĕн çарĕсене активлăн пулăшса пынипе палăрса тăрать. Нимĕçсем хĕвелтухăç фронтĕнче çавтери пысăк йывăрлăхсемпе тĕл пулнинне ăнлантарса паракан сăлтавсенчен пĕри çакă пулса тăрать ĕнтĕ. Çак обстоятельство Германи войскисен çухатăвĕсене татах та ытларах ӳстерет, çакă вăл Россинăри кампание татса паракан фактор пулса тăма та пултарать».

Ассошиэйтед пресс агентствин обозревателĕ Симпсон: нимĕçсем Ростовран чакса тухни Германин хĕçпăшалăлă вăйĕсем вăрçă пуçланнăранпа малтанхи хут тӳснĕ чи пысăк поражени пулса тăрать пулĕ,—тесе çырать. Çав поражение пула нацистла çарсен фронтăн сылтăм енчи мĕнпур вăйĕсем пĕтсе ларма пултараççĕ. Нимĕçсем Мариуполь патнелле чакаççĕ пулмалла, унта вĕсем пулăшу кĕтсе илме шанаççĕ пулĕ.

«Дейли ньюс» хаçат, нимĕçсене Ростов патĕнче пырса çапни Гитлерăн кăнтăрти мĕнпур кампанине аркатса яма та пултарĕ тен, тесе çырать. Пĕр Ростов хулине çухатни кăна Гитлер вăрçă пуçланнăранпа мĕнле те пулин фронтра тӳснĕ пораженисенчен чи йывăр поражени пулса тăрать. Çав поражение вырăссем кӳчĕç. Гитлерăн шăпи Наполеонăн шăпи пекех пуласси курăнсах тăрать, тесе çырать хаçат.

Ассошиэйтед пресс агентствин Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, нимĕçсем Ростов патĕнче хăйсем поражени тӳсни çинчен шарламасăр тăма пăхаççĕ. Çавна май корреспондент çапла аса илтерет: нимĕçсем Ростова хăйсем йышăннă хыççăн Германин «Динст аус дейчланд» ятлă бюллетенĕ çав хула малалла кайса пырас ĕçре пысăк вырăн йышăнса тăни çинчен çырнăччĕ. Анчах халĕ бюллетень нимĕçсен Ростов патĕнчи çухатăвĕсене пĕчĕклетсе кăтартма хăтланать.

«Вашингтон пост» хаçат çапла çырать: Архангельск урлă Куйбышев хулине пырса çитнĕ Америка корреспонденчĕсем, вăрçă пынине пăхмасăрах Советăн транспорт системи тĕлĕнмелле лайăх ĕçлет, тесе пĕлтереççĕ. Сăнаса тăракансем Совет Союзĕ хăйĕн промышленность оборудованийĕсене турттарма пултарнинчен тĕлĕннĕ, мĕншĕн тесен мирлĕ вăхăтра Совет Союзĕн транспорчĕ сахал тата промышленность ыйтнине тивĕçтерме шултараймасть, тесе шутланă. Корреспондентсен шухăшĕпе, советăн транспортне çакăн пек хаклани, советăн хĕçпăшалăлă вăйĕсем çине тĕрĕс мар хакласа пăхни пекех, йăнăш пулнă.

АНКАРА, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Турцири обществăллă çынсем хушшинче совет войскисем Ростова йышăнни çинчен туслă комментарисем параççĕ. Пичет те Совет хĕçпăшалĕн питех те пысăк çитĕнĕвĕсем çинчен çутатса çырать. «Улус» хаçатра Эсмер çапла çырать: нимĕçсем Хĕрлĕ Çара «пĕтерсе тăкни» çинчен мухтанса пĕлтернĕренпе икĕ уйăх иртнĕ хыççăн çав çар Ростова тепĕр хут каялла тытса илнĕ. Германин тивĕçлĕхне хăватлăн пырса çапнă, тесе пĕлтерет Эсмер. Польшăри, Голландири, Францири тата Балканри вăрçăра нимĕçсем çăмăллăнах çитĕнӳсем тунă хыççăн, нимĕç çарне нимĕнле вăй та хирĕç тăма пултараймасть, текен шухăш сарăлнă. Анчах çав суя юмаха Россия сирсе, сапаласа ячĕ.

Данин Лондонри посланникĕ пĕлтерни

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Данин Лондонри посланникĕ граф Ревентлов Данин ютĕршыв ĕçĕсен министрне, юлашки вăхăтра Дани правительствин Германи майлă тăрас политики вăйланни, ун шухăшĕпе, Данин тивĕçлĕхне чакарать тата Даниле Британи империйĕ хушшинчи лайăх отношенисене тытса пыма чăрмантарать, тесе пĕлтернĕ. Ревентлов, çавăн пек условисенче хăй Дани правительствин представителĕн ĕçĕсене малашне пурнăçа кĕртсе пыма пултарайманни çинчен пĕлтернĕ. Ревентлов, ирĕклĕ датчансен представителĕ пулса, Англи правительствипе дипломатиллĕ отношенисене туса пырать.

Дани посланникĕ пĕлтернине, тесе кăтартса парать агентство, Англири официальнăй çынсем хушшинче ырлаççĕ. Дани правительстви Гитлер майлă пулни халăхăн шухăш-кăмăлне начарлатать, Копенгагенра пулса иртнĕ демонстраци те çавнах кăтартса парать.

Нимĕçсен тискер ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Таймс» хаçатăн Лиссабонри корреспонденчĕ—советăн тытăкăна лекнĕ çар çыннисене нимĕçсем этемле мар условире тытса усраççĕ тата тĕрлĕрен майсемпе асаплантараççĕ, тесе çырать. Корреспондент—советăн тытăкăна лекнĕ çар çыннисем йышлăн вилеççĕ, тесе палăртать.

Совет Союзне пулăшма

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, премьер-министр Черчилль арăмĕ организациленĕ Хĕрлĕ Хĕресĕн Совет Союзне пулăшмалли фончĕ икĕ уйăх хушшинче пĕр миллион кĕрепенке стерлинга çити ӳснĕ. ССР Союзне 5 хутчен пысăк хисеппе медикаментсем, хирурги инструменчĕсем т. ыт. те—пурĕ 200.000 кĕрепенке стерлинглăх ярса панă. Декабрĕн 3-мĕшĕнче премьер-министрăн Даунингсрит резиденцийĕлче Черчилль арăмĕ организациленĕ фонд ячĕпе йышăну пулса иртнĕ. Йышăнура вăл çапла каланă: «Пирĕн хушăсем инçе пулсан та, эпĕ шанса тăратăп, англичансен чĕрисем, классене, партисене тата çулсене пăхмасăрах, вырăссен чĕрисемпе пĕрле пулнине тата вĕсем вырăссем çĕнтерессе кĕтсе тăнине Россинăри халăхсем пĕлеççĕ», тенĕ.

Америкăра Совет Союзне медицина енчен пулăшу парас ĕçе вăйлатаççĕ

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Россинăна пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитет» председательĕ Хатер каланă тăрăх, çак Комитет хальхи вăхăтра ССР Союзне медикаментсемпе хирурги инструменчĕсем тата ыт. те илсе ярас шутпа 3 миллион доллар таран укçа пухассишĕн кампани туса иртнĕ. Çакна валли Комитет ку вăхăта 358 пин доллар пуçтарнă. Чылай япаласене илсе янă та ĕнтĕ. Вăл шутран 10 операционнăй пункт валли çителĕклĕ хатĕрсем, тĕрлĕрен материалсем тата нумай медикаментсем халăхи вăхăтра çул çинче. Ситес кунсенчех çакăн пек материалсен тепĕр ушкăнне ăсатаççĕ. «Россинăна пулăшу парас тĕлĕшпе ĕçлекен Комитета» икĕ уйăх каярах организациленĕ, çак хушăра унăн отделенийĕсем Пĕрлешӳллĕ Штатсен нумай хулисенче уçăлнă. Çавăн пек отделенисем Нью-Йоркра, Бостонра, Лос-Анжелосра, Балтиморта, Чикагора, Детройтра, Филадельфире ĕçлеме тытăннă ĕнтĕ. Çĕршывăн тĕрлĕрен районĕсенче çакăн пек пулăшу Комитечĕн отделенийĕсем çĕнĕрен уçăлни çинчен хыпарсем кашни кунах килсе тăраççĕ.

Рузвельт Турцие хĕçпăшал кивçенле е арендăна пама распоряжени кăларнă

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, хĕçпăшала кивçенле е арендăна памалли законпа усă курса, Турцие пулăшу пама йышăннă, тесе пĕлтернĕ Рузвельт.

Рузвельт çапла каланă: Турцири оборона ĕçĕ Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен оборонишĕн паллă вырăн йышăнса тăрать. Çавăнпа та Рузвельт хĕçпăшала кивçенле е арендăна парас закона пурнăçа кĕртес тĕлĕшпе ĕçлекен уполномоченнăя Стетиниуса Турци правительстви оборона тĕлĕшпе ыйтнисене май килнĕ таран хăвăртрах татса пама хушнă.

Японипе Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем хушшинчи калаçусем пирки Америка хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). «Нью-Йорк таймс» хаçат хăйĕн умстатьинче çапла çырать: Америкăна Япони хушшинче туслăн пурăнмалли килĕшӳ договорне японецсем хăйсен войскисене Китайран илсе кайсан çеç гума пулать. Анчах та, Япония хăй Китайра пуçпулса тăма шухăшланинне çаплах йышăнтарасшăн пулсан, çак шухăшран чакмасан, Вашингтонра нимĕнле каласу та килĕшӳ патне илсе пырас çук.

«Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем Лăпкă океан çинче мирлĕ пурнăç тытасшăн,—тесе çырать çак хаçатах,—анчах та вĕсем Китая Япони аллине парса суя мир туянассипе килĕшмеççĕ».

Паллă журналист Липман та «Нью-Йорк геральд трибюн» хаçатра çавăн майлах çырать. «Вашингтон пост» хаçат, Япония Тая çине тапăнма тăрсан, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен, Англипе, Голландипе тата Китайпа пĕрле пулса, Япония хирĕç тухасси çинчен уççăнах пĕлтермелле, тесе çырать.

Япони Индо-Китая çĕкĕрен çар чăсĕсем ярать

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Шанхайри корреспонденчĕ, ютçĕршыв разведки пĕлтерекен хыпарсем тăрăх, японецсем Индо-Китайăн кăнтăр пайĕнче механизациленĕ çар чăсĕсене пухса тăратни çинчен каласа парать. Вăл çар чăсĕсен çăмăл танксем, 500 самолет, грузовиксем тата ыт. те пур. Юлашки эрнере Япони транспорчĕсем кунта пит те йышлă çар хатĕрĕсем тата чылай войскăсем илсе пынă. Ситес кунсенчех Кăнтăр Китайпа Формоза утравĕнчен Япони çарĕсен çĕнĕ чăсĕсем пырасса кĕтеççĕ. Ку вăхăтра Индо-Китайăн кăнтăр пайĕнче тăракан Япони çарĕсен хисепĕ сахалтан та 70 пин çынран кая мар тесе шутлаççĕ.

Австралия тата Çĕнĕ Зеландия США-па килĕшӳ тунă тесе пĕлтереççĕ

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС) «Нью-Йорк таймс» хаçатăн Вашингтонри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: илнĕ сведенисем тăрăх, Австралия тата Çĕнĕ Зеландия Вашингтонпа килĕшӳ тунă. Çав килĕшӳ тăрăх, кирек мĕнле йывăр ĕç сиксе тухсан та, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем икĕ çĕршывпа та каласса татăлма пулаççĕ. Австралипе Çĕнĕ Зеландия Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсене авиаци базисене тума горючи усрама майсем туса панă. Корреспондент сăмахĕ тăрăх, официальнăй сынсем хушшинче çакăн пек килĕшӳ тунине çирĕплетмеççĕ, анчах ăна хирĕçлемеççĕ те. Австралин премьер-министрĕ нумаях пулмасть сăмах тухса каласа, Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсем японецсемпе каласса татăлас ĕçе ертсе пыма хăйсем çине илнипе Австралия килĕшме хатĕр тăрать, тесе пĕлтернĕ. Корреспондент, юлашки эрне хушшинче Австралин тата Çĕнĕ Зеландин посланникĕсем кашни кунах государство департаментĕнче пулнă, тесе палăртать.

Ливири вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин информаци министерстви çапла пĕлтерет: Лондонри авторитетлă çынсем хушшинче шутланă тăрăх, Ливире, Сиди — Резех районĕнче пулса иртнĕ вăйлă çапăçусем хыççăн, хальхи лăпкăланнă вăхăтра англичансем те, нимĕçсем те хăйсен çар чăсĕсене урăхлатса йĕркелес тĕлĕшпе ĕçлеççĕ. Лондонра çапла шутлаççĕ: противникăн Соллум-Сиди-Омар районĕнчи оборонăна тытса тăма танксем пулсан, ку района илессишĕн нумай вăй хумалла пулать тата вăйлăн çапăçма лекет. Çавăнпа та тăшман танкĕсене çак района кирек мĕнле пулсан та ямалла мар. Тăшманăн бронетанковăй чăсĕсем Бардия районне пыраймасан, тĕнĕл держависен войскисем пысăк хăрушлăхра тăрса юлаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем вара нимĕнле вăрçă хатĕрĕ те илме пултараймаççĕ. Тăшман хăйĕн чăсĕсене кирлĕ япаласене тинĕспе илсе пыма тăрăшни — çакă вăл унăн кунти войскисене ытти çĕртен пырса пулăшма май çуккине кăтартать.

Вăтаçĕр тинĕсĕнче Итали суднисене путарни

ЛОНДОН, декабрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Англин тинĕс министерстви Англин çар карапĕсем Вăтаçĕр тинĕсĕн вăтаçĕр пайĕнче Ливири çарсем валли материалсем илме кайма хăтланакан противникăн суднисене хирĕç ăнăçлăн кĕрешни çинчен пĕлтерет.

Декабрĕн 1-мĕшĕнче Англи карапĕсем орудисенчен персе Италин «Адриатико» ятлă транспорт пароходне путарнă. Пароходăн тоннажĕ — 1977 тонна, вăл артиллери снарячĕсене гиесе пынă пулнă. Çавăн хыççăн часах Италин «Альвице да Мосто» ятлă пысăк эсминецĕ хӳтĕлесе пыракан «Мантомани» танкера атакăланă. Противник эсминецĕ взрыв пулнипе сирпĕнсе кайнă, танкера, — ун çинче 10 пин тонна яхăн горючи пулнă, — путарнă. Англи карапĕсем çав çапăçура сиенленмен. Англи енчен çухатусем çук.

Противникăн пароходне атакăланă

ЛОНДОН, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Англин авиаци министерстви кăларнă коммюникере çапла каланă: декабрĕн 4-мĕшĕнче каçхине çыранри авиацин «Харрикейн» самолечĕ противникăн пароходне Норвеги çыранĕсем патĕнче атакăланă. Бомбăсем пăрахнине пула пароход çинче пушар тухнă. Зенитнăй артиллерирен пенипе самолет вăйлăн сиенленнĕ пулсан та хăйĕн базине ăнăçлăнах çитнĕ.

Германин пассажир самолечĕсем ӳксе çĕмĕрĕлнĕ

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 4-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентствин Анкарари корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, юлашки икĕ эрне хушшинче Белград—Салоники хушшинчи сывлăш çулĕ çинче нимĕçсен пассажирсем лартса çӳрекен 4 самолечĕ ӳксе çĕмĕрĕлнĕ. Германин официальнăй представителĕсем, самолетсем сивĕсем пуçланнă пирки ӳксе çĕмĕрĕлнĕ, тесе пĕлтереççĕ. Анчах лайăх пĕлсе тăракан çынсем хушшинче, тесе çырать корреспондент, Германие хирĕçле саботаж акчĕсене пула самолетсем час-часах ӳксе çĕмĕрĕлеççĕ, тесе кăтартса параççĕ.

Турци журналисчĕ фашистла йĕркене тăрă шыв çине кăларать

СТАМБУЛ, декабрĕн 4-мĕш. (ТАСС). «Сон телеграф» хаçат Белидже статьине пичетлесе кăларнă. Вăл хăйĕн статьинче Германин «çĕнĕ Европа» тĕлĕшпе тăвакан пропаганди суя тата улталăлă пулнине тăрă шыв çине кăларать, çав «çĕнĕ Европа» халăхсене пусмăрланине пĕлтерет, тесе кăтартса парать. Малалла автор, Германия, хăйĕн территорине аслăлатас шутпа, Европăри нацисене вăрçăпа пĕтерсе пырать, тесе çырать. Апла пулсан та, вăл хăйĕн атти айĕнче асапланакан халăхсене: «сывлăхлă пул, пирĕн господин. Пирĕн юн тата пурăнăç санăн парне пултăр. Эсĕ приказ парсан, эпир пурăçлатпăр, кирек мĕнле тĕллев кăтартса парсан та, эпир ăнланатпăр», тесе калаттарасшăн. Берлин темĕн те хăтланасшăн пулĕ те,—тесе çырать Белидже, — анчах халăхсем хăйсем никама пăхăнса тăрас марришĕн кĕрешеççĕ. Югославие восстани çавăрса илнĕ, Норвеги хумханать. Грецире партизансем ăнăçлăн кĕрешеççĕ. Польшăри чугунçулсене хӳтĕлесе тăма гитлеровецсен 50 пин салтак тытса тăма лекет. Европăн оккупациленĕ пайĕсенче Германие хирĕçле шухăш-кăмăлсем кунран-кун вăйланса пыраççĕ.

Юлашкинчен автор пусмăра кĕртсе ӳкернĕ халăхсене ирĕке кăларас тĕлĕшпе СССР, Англия тата США пĕрпĕрне пулăшса тăрса кĕрешнине палăртать.

Голландири репрессисем

НЬЮ-ИОРК, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Фашистсен Голландире тухса тăракан хаçачĕ «Ньюве ротердамме курант» пĕлтернĕ тăрăх, Голландире пĕр октябрь уйăхĕнче çеç экономикăллă тĕкен суд органĕсем 2068 çынна тĕрлĕ сроклăха тĕрмене хупмалла тунă.

Уэллес заявленийĕ

ВАШИНГТОН, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешӳллĕ Штатсен государственнăй секретарĕн заместителĕ Уэллес, пичет представителĕсемпе калаçнă чухне, çапла каланă: Япония Таине тытса илсен, англичансем çав самантрах Японие хирĕç вăрçă пуçласа яма хатĕрри çинчен Англире тухса тăракан хаçатсем мĕн çырнине эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, тенĕ.

Таири положени

ШАНХАЙ, декабрĕн 5-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентстви çапла пĕлтерет: Таи правительстви оборонăна хатĕрленес тĕлĕшпе мĕнпур тивĕçлĕ ĕçсене туса пырать. Тинĕс Флотне территориальнăй шывсене сыхлама хатĕрлесе тăратнă. Бонгкокри тата унăн таврашĕнчи стратегиллĕ пунктсене хĕçпăшаллă хурал вырнаçтарнă. Тĕрлĕ районсенче васкасах бомбоубежищесем тăваççĕ

Интеллигенцин районри пухăвĕ

СĔНТĔР. Ноябрь уйăхĕн вĕçĕнче интеллигенцин районри пухăвĕ пулса иртрĕ.

Пуху Сталин юлташ ноябрĕн 6-мĕшĕнче Мускав Совечĕн чаплă лараввĕнче тунă доклада тата çак докладран тухса тăракан задачăсене пурнăçласси çинчен сӳтсе-явăрĕ. Ку ыйтупа ВКП(б) райкомĕн секретарĕ Г. М. Гусев юлташ доклад туса пачĕ.

Гусев юлташ хăйĕн докладĕнче районри интеллигенцин ĕçĕсем çинчен каларĕ тата Сталин юлташ докладне ăнлантарса панă май ĕççыннисен патриотизмĕ ӳссе пынине палăртса хăварчĕ.

Шомик ялсоветĕнчи учительсем Сталин юлташăн докладĕпе сăмахне ĕççыннисем хушшинче тĕплĕн ăнлантарса параççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ çак ялсоветри «Колос» колхоз хирлĕ ĕçсене планне срокчен пурнăçланă. Ку тĕлĕшпе уйрăмăнах Олангин тата Юлин бригадирсем аван ĕçлеççĕ. Шомикри туллимар вăтам шкулта вĕренекенсем Хĕрлĕ Çар валли шăлан çырли пухас ĕçе пуçарса янă.

Шупуç пуçламăш шкулĕн заведующийĕ Яшмолкина юлташ колхозниксем хушшинче тăтăшах калаçусем ирттерет. Колхозниксене те, ачасене те ПВХО ĕçне вĕрентессине лайăх организациленĕ. Унăн шкулĕнчи ачасем пурте ПВХО нормине панă. Çавăн пекех учитель-орденоносец Багров (Сĕнтĕр вăтам шкулĕ) тата РСФСР тава тивĕçлĕ учительниця Пчелина (Ильинкăри туллимар вăтам шкул) юлташсем те хăйсен ĕçĕсене пысăк пахалăхпа туса пыраççĕ, халăх хушшинче активлăн ĕçлеççĕ.

Районри интеллигенци çĕршыв оборонине пулăшас тĕлĕшпе туса ирттернĕ комсомолецсемпе çамрăксен 3-мĕш воскресникне активлăн хутшăннă. Районĕпе пурĕ 5324 çын ĕçе тухнă, вĕсем 724 ĕçкунĕ тата 12.840 тенкĕ укçан ĕçлесе илнĕ. Çав тупăша пĕтĕмпех танксен колоннисене тунă çĕре панă.

Октябрьски районри «Большевик» промартельри çамрăксен чĕнĕвне ответлесе, «Комсомол Чувашии» бронепоезда тума районĕпе 18.062 тенкĕ укçа пухнă. Ку ĕçе те интеллигенци активлăн хутшăнни курăнать. Уйрăм çынсем, учительница Е. Петрова 300 тенкĕ, райкомол секретарĕ А. Иванова 200 тенкĕ панă.

Анчах, калас пулать, районри уйрăм шкулсемпе учительсем хăйсен ĕçĕсене вăрçă вăхăтне тивĕçлĕ пек урăхлатса çĕнетмен-ха.

Тĕслĕхрен, Шатракассинчи, Кăпаспи, Мускассинчи туллимар вăтам шкулсенчи учительсем мирлĕ вăхăтри пек лăпланса пурăнаççĕ. Кадикассинчи, Юнгă-Пуçĕнчи, Чурикассинчи пуçламăш шкулсенчи учительсем Хĕрлĕ Çар валли ăшă япаласем парас ĕçе начар хутшăнаççĕ.

Юлашкинчен, докладчик районри пур интеллигентсене те Сталин юлташăн доклачĕпе сăмахне масса хушшинче ăнлантарса парас тĕлĕшпе çине тăсах ĕçлеме, пĕтĕм вăя хурса фронта пулăшма чĕнсе хăварчĕ.

Доклад тăрăх учитель-орденоносец Багров, ЧАССР Наркомпросĕн шкул инспекторĕ Отачкин, РОНО шкул инспекторĕсем Водоватова тата Пожеданов, райкомол секретарĕ Иванова, райсовет исполкомĕн секретарĕ Тимофеев тата ытти юлташсем те тухса калаçрĕç. Тухса калакансем пирĕн интеллигенци умĕнче тăракан практикăллă ĕçсем çинчен тĕплĕн чарăнса тăчĕç.

Юлашкинчен, пуху Сталин юлташ докладĕнчен тухса тăракан задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе районри интеллигенци туса ирттерме тивĕçлĕ практикăллă ĕçсене палăртса резолюци йышăнчĕ.

С. ПАКУШКИНА.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТРЕБУЮТСЯ
химик-специалист
по анализу черных и цветных металлов и
сторож
Обращаться по адресу: Ленинградска , 38
5—3

ПУРНĂÇПА ВИЛĔМ ÇИНЧЕН

(Юлашки, пуçламăшĕ 3-мĕш страницăра)

лас шăпа. Унăн вилĕмĕ—пирĕн вилĕм. Унăн çĕнтерĕвĕ—пирĕн çĕнтерӳ.

Тăшмана çĕнтернĕ хыççăн эпир кашниненех çапла ыйтăнăр: çĕнтерӳ валли эс мĕн турăн? тейĕпĕр.

Эпир нимĕн те манас çук!

Эпир никама та каçарас çук!

Ак выртать вăл, Ылханлă Антон, тăван çĕршывăн чи хăрушă сехет çитнĕ чухне хăйне-хăй Тăван Çĕршывран уйăрнăскер. Выртать вĕлтĕреннe хытхура хушшинче. Вăл хăйĕн тирне йытă пурнăçĕшĕн сыхласа усранă, çавăнпа вилессе те йытă вилĕмĕпе вилчĕ.

А эпир унăн сывăхĕнчен роти-ротипе тимĕр пек çирĕп утăмсемпе утса иртетпĕр. Нимĕн çавăрăнса пăхмасăрах, нимĕн хĕрхенмесĕрех иртетпĕр. Тул çутăлсан, çапăçăва кĕретпĕр. Штыксемпе чикĕшме каятпăр. Эпир хамăрăн пурнăçа хĕрхенмесĕр çапăçатпăр. Тен, вилĕпĕр те. Анчах та никам та пирĕн çинчен, кусем хăраçса пулнă, вĕсемшĕн хăйсен тирĕ Тăван çĕршывран хаклăрах пулнă, тесе калас çук.

4.

Юлташ!

Тата икĕ сехет çеç тăрса юлчĕ тул çутăласси. Атя, хамăр мĕне ĕмĕтленни çинчен сасăпа калаçса илер.

Çак каçăн сĕмлĕхĕ витĕр эпĕ çапăçупа вилĕм умне тухса тăнă çын пек инçетерех куракан куçсемпе тинкерсе пăхатăп. Темиçе кун, çĕр, эрне, уйăх витĕр пăхатăп эп малалла. Пăхатăп та темĕн чухлĕ хуйхă-суйхăпа асап урлă хамăр çĕнтерӳ çиçсе тăнине куратăп. Ситетпĕр эпир çав çĕнтерӳ патне. Тăшмана тĕппипех тата яланлăхах çĕнтеретпĕр эпир! Эпир вăл çĕнтерĕве хамăр чĕререпе усратпăр, эпир ăна хаярран çапăçса илетпĕр.

Аса ил вăрçă умĕнхи çулсене. Пирĕн пĕтĕм ăру çинче вăрçă хĕçĕ çакăнса тăнă. Эпир пурăнаттăмăр, ĕçлеттĕмĕр, хамăр арăмсене ачашлаттăмăр, ача-пăчасем ӳстереттĕмĕр, анчах та чикĕн леш енче хаяр тискер кайăк хăрлатса тăни çинчен пĕр самантлăха та манмастăмăр. Вăрçă яланах пирĕн кӳршĕ пулнă. Ирсĕр çĕлен-калта сылăшĕ пирĕн ĕçе те, пурăнăç та, юратăва та наркăмăшлă шăршăпа вараласа пурнатчĕ. Çавăнпа та эпир пĕртте лăпкăн сывăрмастăмăр. Кивĕ шинельсене арча тĕпне пытарса хуман эпир. Кĕтнĕ.

Тăшман пирĕн çине тапăнчĕ. Акă халь вăл пирĕн çĕр çинче. Хăрушă çапăçу пырать. Е пурнăç, е вилĕм! Халĕ никĕмле компромисс та пулма пултараймасть. Суйласа тăмалли çук. Пăв, пĕтер, ĕмĕрлĕхех çапса аркатса тĕп ту гитлерла тискер кайăксене! Хăçан та хăçан вилĕм шăтăкне юлашки фашист перçе анĕ, хăçан та хăçан гаубицăсен юлашки залпĕ тамалĕ, çавăн чух тин фашизмăн ирсĕр мĕлки усал тĕлĕк евĕр сирĕлсе кайĕ те, лăпкă вăхăт, çĕнтерĕвĕн мухтавлă та çирĕп шăплăхĕ çитĕ. Эпир ун чухне, юлташ, хаваслă вăрман тураттисем шавланă сасса çеç мар илтĕпĕр. Пĕтĕм тĕнче, пĕтĕм этемлĕх епле çăмăллăн та савăнăçлăн сывласа янине те илтĕпĕр.

Тăшмансенчен тасатнă хуласемпе ялсене çите-çите кĕрĕпĕр те эпир—пире пур çĕрте те мухтавлă шăплăх, телейлĕпе тулса çитнĕ чунсен шăплăхĕ кĕтсе илĕ. Унтан вара—çĕнĕрен тӳрлетсе ĕçе янă заводсен трубисем мăкăрланма пуçлĕç, пур çĕрте те хĕрӳ пурнăç вĕреме тытăнĕ... Калама çук чаплă пурнăç пуçланĕ, юлташ! Ирĕклĕ çĕр çинче пур халăхсемпе те тăванлăн пурăнса ирттермелли пурнăç пуçланĕ.

Ун пек пурнăçшăн вилни те сахал. Вăл пурнăçшăн вилни—вилĕм мар, вилĕмсĕрлĕх.

5.

Тул çутăлать, юлташ...

Çĕр сийĕпе тĕссĕр те шиклĕ мĕлкесем йăпшăнса иртрĕç. Пурнăç маншăн çак тул çутăлас умĕнхи сехетри пек нихăçан та чаплăн туйăнман. Пăх халĕ, епле хитреленсе кайрĕ Дон çесенхирĕ, епле йăлтăртатса çунма пуçларĕç хĕвел çуттинче шурă тăмлă тусем,—вĕсем çутă кĕмĕл пекех пулса кайрĕç.

Çапла, питĕ пурăнас килет. Сĕнтерӳ курас килет. Çири куштăркка шинель çумне хамăн тăван хĕрĕмĕн кăтра пуçне чĕмăртас килет.

Эпĕ питех те пурнăçа юрататăп, çавăнпа та халĕ çапăçăва каятăп. Пурнăçшăн çапăçăва каятăп эпĕ. Чуралла пурнăçшăн мар, чăн-чăн пурнăçшăн çапăçма каятăп, юлташ! Хам ачасен телейĕшĕн. Хамăн Тăван Çĕршывăн телейĕшĕн. Хам телейĕмшĕн. Юрататăп эпĕ пурнăçа, анчах та ăна хĕрхенместĕп. Юрататăп эпĕ пурнăçа, анчах вилĕмрен хăрамастăп. Пурăнасса та воин пек пурăнас, вилессе те воин пек вилес—акă епле ăнланатăп эпĕ пурнăçа.

Тул çутăлчĕ...

Гаубицăсем кĕрлеме пуçларĕç. Артподготовка пырать.

Халех эпир те каятпăр.

Юлташ!

Тăван Дон çесенхирĕ çине хĕвел тухрĕ. Çапăçу хĕвелĕ вăл.

Çав хĕвелĕн çуттинче эп сана чаплăн та мухтавлăн шантарса çапла тупа тăватăп: çапăçура эпĕ чĕтремĕп. Амансассăн стройран тухмăп. Тăшмансем хупăрласа илсен—вĕсен аллине парăнмăп. Ман чĕремре халĕ ни хăрас шухăш, ни хумханас кăмăл, ни тăшмана хĕрхенес сисĕм çук. Ман чĕремре халĕ — курайманлăх кăна. Хаяр курайманлăх. Çав курайманлăх сунтарать чĕрене. Ку—пирĕн юнлă çапăçу.

Каятăп.

Борис ГОРБАТОВ.

(«Правда» хаçатран).

Кăнтăр фрончĕ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 0—88, çыруçемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин сулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 6522

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 651, Ф б. 58 84 п. л.